Чебоксарск. ин
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 5 ЕРНЕКУН 179 (4992) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикин Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 6—23

Кĕраки ĕçне большевикла ирттерессишĕн

Йалхуçалăхĕнчи стахановла ĕçĕн паха резулътачĕсем халь ĕнтĕ кашни колхозникшĕн паллă. Çуркунне—çанталăк условийĕсем кĕрхи тырă калчисемшĕн пит килĕшӳлех пулмарĕç пулин те, кăçал чылай колхозсем иртнĕ çулхинчен те вăйлăрах тырпул туса илеççĕ. Çакă вăл чи малтанах агротехникăлă ĕçсене анлăн тата вăхăтра туса ирттернинчен килчĕ.

Республикăри колхозсен уйхирĕсенче халь хĕрӳлĕ ĕç пырать. Уйхир стахановецĕсен йышĕ кунтан куна нумайланать. Çурхи тырăсем кĕрхи тырăсемпе пĕр вăхăт тĕлĕнче пулнă май, чылай колхозсен кăçал кĕрхи тырăсене вырса пĕтервĕ-пĕтерменех çурхи тырăсене вырма тытăнмала пулчĕ. Çавăнпа та пĕр вăхăтрах колхозсен халь государствăна тырă памала, авăн çапмала, кĕлтесене турттарса капана хывмала, хатĕрлев пункчĕсене тырă турттармала.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç пĕтиччене колхозсем умĕнче тепĕр пысăк ĕç—кĕрхи тырăсене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа акса хăварас ĕç тăрать. Çак ĕçпе пĕрле ĕнтĕ çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕç пуçланать, меншĕн тесен кĕрхи тырăсен тухăçне вăйлă туса илесси чи малтанах кĕракине ăнăçулăн туса ирттернинчен килет.

Вăйлă тырпулшăн чăннипех большевикла кĕрешекен колхозсем уйри тырпулсене пухса кĕрес ĕçе кĕракине хатĕрленес ĕçпе тĕрĕс сыхăнтарса пыраççĕ. Йепрес районĕнчи „Ударник" колхоз кĕракине ирттерме ĕç планĕ туса колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-йавса çирĕплетнĕ. Кашни бригадăна заданисем парса ĕç вăйĕ тата машинăсем çирĕплетсе панă. Кам мĕнле ĕçре пулмалине малтанах палăртса хунă.

Шăхасан районĕнчи „Свобода" колхоз кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ-пĕтерменех авăн çапса государствăна тырă парса татнă хыççăн, кĕрхи тырăсене акма вăрлăхлăх çапса хатĕрлесе хунă. Çапнă вăрлăха тĕплĕн тасатса, акас умĕн вутпуççирен чӳкесе тасатма хатĕрлесе çитернĕ.

Анчах та, пĕтĕм республикипе илсен, кĕракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пырать. Кĕрхи тырăсене акиччен туса ирттермели агротехникăлă ĕçсем чылай районсенче пурнăçа кĕреймесĕр йулас хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Патăрйел, Йепрес, Вăрнар, Çĕрпӳ тата ытти хăшпĕр районсенче пайан куна та çĕртме уйне акнă викăсене çулса пуçтарса кĕртсе сухаласа пăрахманни, МТС-сенче тата колхозсенче сейалкăсене йусаса йĕркелесе çитермени районсенчи парти, совет тата çĕрĕç оргăнĕсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе çителĕклĕ хакламаннине кăтартса параççĕ.

Чылай районсенче кĕрхи тырăсем акмали уйа тислĕк тата минераллă çăнăхсем кăлармали плана пурнăçласа çитереймен. Патăрйел тата Турхан районĕсем фосфорит çăнăхĕ турттармали плана мĕн пурĕ те 2 процент, Шăмăршă районĕ 4,7 процент çеç пурнăçлавă. Çĕрпӳ, Шупашкар, Йелчĕк, Елĕк тата Трак районĕсем те минераллă çăнăхсене хакламаннине кăтартаççĕ.

Хĕшпĕр районсенче уйа тислĕк кăларасси те йулса пырать.

Вăрнар, Йĕпрес тата Пăрачкав районĕсем тислĕк кăлармали плана 25 процента çити те тултарайман.

Уйа тислĕк тата минераллă çăнăхсене кăлармали плана тултармалах. Тырпул тухăçне пуш сăмахпа ӳстермеççĕ. Уйхире лайăх сухаласа кăпăшкалатсан, суйласа илнĕ таса та суртлă вăрлăха вăхăтра акса хăварсан тата тислĕкпе минераллă çăнăхсемпе çителĕклĕ усă курсан—агротехникăлă ĕçсене пĕтĕм комплексĕпе туса ирттерсен çеç вăйлă тырпул туса илме пулать.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре вăрлăх пит пысăк вырăнта тăрать. Вăрлăх пахалăхне вăрлăх лабораторийĕсенче тĕрĕслемесĕр, вутпуççирен чӳкемесĕр пĕр пĕрчĕ те акмала мар. Кашни колхозăн вăрлăх участки çинчи тырра халех çапса вăрлăх хатĕрлемеле. Вăрлăх суртлăхĕ йышăннă категорилĕ мар пулсан, августăн 13-мĕшне çитиччен урăх колхозпа улăштарса çитермеле.

Кĕрхи тырă, çуртрисем пекех, вăхăтра тата кĕске срукра акнине йуратать. Унтан та ытла—малтан акни те тата кайа йулса акни те ушăн сийенлĕ. Çавăнпа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ кĕрхи тырăсене 6—8 кун хушшинче акса пĕтермеле тесе кăтартса параççĕ.

Партипе правительствă колхозсем умне кăçал тепĕр пысăк задачă лартаççĕ—кĕрхи тырăсене пĕтĕм лаптăкĕпех машинăсемпе акса хăвармала. Колхозсенчи тата МТС-чи сейалкăсен хисепĕ çав задачăна çăмăллăнах пурнăçа кĕртме май пуррине кăтартать. Ку задачăна пурнăçа кĕртесси МТС-сем тата колхозсем сейалкăсене ĕçе мĕнле хатĕрлесе лартнинчен, вĕсемпе туллин усă курса ĕçлемеле тунинчен çеç килет.

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн паянхи номĕрĕнче пичетленĕ „1938 çулхи кĕракине хатĕрленесси çинчен" Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ йышăннă постановлени кĕракине хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллисене конкретлăн кăтартса парать. Çав постановленийе кашни колхоз, кашни колхозник патне çитмеле тăвас пулать.

Паллах, кĕракине ăнăçулăн ирттерес задачă колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилеме хушать. Çав май партипе совет организацийĕсен тата çĕрĕç оргăнĕсен колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче массăлă-политикăлă ĕçе татах анлăн сармала, социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма татах та вăйлатмала. Çапла ĕçлесен çеç кĕракине большевикла ирттерме, тырпулсене пухса кĕртес ĕçпе государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарас ĕçе вăхăтра туса ирттерме пулать.

Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем пирĕн чикĕсем çине тапăнакан кирек мĕнле тăшмана та çапса аркатма хатĕр

Тăшмана таптаса лапчăтăпăр та тĕп тăвăпăр!

Йапони войеншчинин намăссăр та ирсĕр провокацийĕ пĕтĕм совет халăхĕн тăшманшăн хайар та хăрушă çиллине çĕклерĕ. Пĕтĕм совет çĕрĕ тăрăх, йалсемпе хуласенче, предприйатисемпе колхозсенче, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн чаçĕсенче нумай çынлă митингсем пулса иртеççĕ. Пĕр çын пек пĕр кăмăллă пулса йышăннă резолюцийĕсенче митингсенче пулнисем Йапони войеншчинин провокацилĕ ĕçĕсем хăйсене тарăхтарса хайаррăн çиллентернине кăтартса параççĕ тата совет правительствинчен вăрçă чĕртсе йаракансене намăссăрсене çапса салатмалах отпор пама ыйтаççĕ.

Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтăн хĕрĕх пин çынлă коллективĕ цехсенчи пухусенче йышăннă резолюцисенче çапла калать:

„Епĕр хамăр правительствăран ыйтатпăр: Йапони войеншчинин провокацине ахаль хăвармала мар. Ирсĕр те намăссăр фашиссем пирĕн тăван çĕршывăн вăйĕпе хăватне хăйсен тирĕ çинче тутанса курĕç, совет халăхĕн моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне вĕсем пĕлсе тăччăр".

„Йапони çарĕсем провокаци туса совет территорийĕ çине кĕни,—тенĕ Бакури Сталин йачĕпе тăракан нефть савăтĕнчи рабочисемпе специалиссен митингĕ йышăннă резолюцире,—çакна кăтартса парать: империалисла тискер кайăксем Совет Сойузне вăрçа сĕтĕрсе кĕресшĕн. Социалисăм çĕршывне тискер-кайăкла курайманнипе сукăрланнă Йапони милитарисĕсем телейлĕ совет халăхĕн вăйĕ çинчен, пархатарлă Хĕрлĕ Çар хăвачĕ çинчен манаççĕ. Йапонин фашисла войеншчини çакна манать: партипе правительствă пĕрремĕш хут чĕнсенех епĕр пурте йуратнă тăван çĕршывăмăр-аннене сыхлакансен хурçă речĕсене тăма хатĕр".

„Фашисла йытăсем пирĕн таса çĕр çине тапăнма хăйсассăн, вĕсене халиччен истори курман пек хайар отпор парĕç,—теççĕ Харькăври „Свет шахтера" савăтри рабочисем.—ССР Сойузĕн тăшманĕсене вилмелех çапса салатăпăр, совет халăхĕ Ленин—Сталин йалавĕпе, коммунисăм йалавĕпе кĕрешсе пырĕ, вăл йалава пĕтĕм çĕршывсенчи халăхсем йарса илĕç, вăл пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çийĕн йалкăшса вĕçĕ".

Йапони çарĕсем совет территорийĕ çине кĕни çинчен калакан хыпар совет Донĕн колхозĕсемпе станицисем тăрăх çиçĕм пек хăвăрт саралнă. Йапони войеншчинин намăссăр провокацийĕ Дон казакĕсене мĕн тери тарăхтарса çиллентернине çырса кăтартма та йăвăр.

„Путь социализма" ертелри колхозниксен митингĕ йышăннă резолюцире çапла калать: „Епĕр лăпкă пурнăç ĕçне тăватпăр, анчах пирĕн лашасем, хĕççем йаланах хатĕр тăраççĕ. Партипе правительствă пĕрре чĕнсенех епĕр кирек хаш сехетре те хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршыва сыхлама тăрăпăр".

Харькăв облаçĕнчи, Богодухăвск районĕнчи Хрушчово-Никитăвкă йалĕнче колхозниксен 2 пин çынлă митингĕ пулса иртнĕ.

„Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле,—тенĕ митингра йышăннă резолюцире,—епĕр, колхозниксем, Йапони самурайĕсен провокацилĕ ĕçне хирĕç калама çук пысăк çилĕпе протестлетпĕр. Совет правительствин мирлĕ политикине ырласа, асса кайнă бандитсене хайар ответ пама ыйтатпăр, ун пек провокацисене çĕнĕрен тăвас кăмăлĕ те ан йултăр вĕсен".

Йапони çарĕсем совет территорийĕ çине каçса кĕни çинчен ТАСС пĕлтернисемпе паллашнă хыççăн, хĕрлĕ йалавлă Амур шыв флотилин Н чаçĕнчи краснофлотецсемпе кĕçĕн командирсем, 1938 çулхи кĕркунне килĕсене саланмалласкерсем, срук тухать пулсан та службăна йулма кăмăл туни çинчен пĕлтернĕ. Вĕсем флотилин пĕтĕм личнăй составне чĕнсе çыру çырнă, унта вĕсем хăйсенчен пример илме чĕнеççĕ. Амур çинчи краснофлотецсем партипе правительствăна, карапсен механисăмĕсем пĕр кăлтăксăр ĕçлĕç, тесе шантараççĕ. „Ленин—Сталин ĕçĕшĕн тăван аттемĕр—аслă Сталин аслăн йертсе пынипе епĕр кирек мĕнле тăшмана та тĕпренсе пĕтиччен çапса салатăпăр,"—теççĕ вĕсем.

(ТАСС).

Совет халăхĕ йаланах хатĕр

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи рабочисемпе служăшчисем тата инженерлă-техникăлă работниксем, Йапони самурайĕсем Совет Сойузĕн чиккине тапăннине хирĕç митинг ирттерчĕç.

Ага-пушмак цехĕнчи стахановец Афанасйĕв йулташ хăйĕн сăмахĕнче çапла каларĕ:

— Совет Сойузĕ вăл—ĕлĕкхи патша Российĕ мар. Вăл никам çĕнтерме пултарайман крепăç. Хай вăхăтĕнче тăшмансене епĕр вăйлă отпор патăмăр. Совет çамрăкĕсем хăйсен йуратнă тăван çĕршывне хӳтлеме кирек хăш минутра та хатĕр. Тăшман совет çĕршывне тапăнсан ыррине кураймĕ.

Митингра пулнисем пурте пĕр сăслăн çакăн пек резолюци йышăнчĕç.

„Епĕр, Водопйанăв йачĕпе тăракан савăтра ĕçлекенсен коллективĕ, Йапони войеншчини çакăн пек ирсĕр хăтланни пирки çав тери тарăхатпăр. Пирĕн совет правительстви тата Инçет-Хĕвелтухăçри Хĕрлĕ Йалавлă Фронт малашне те пĕр фашисла сысна та совет пахчине йарас çуккине епĕр чĕререн шанатпăр. Хăйсен ирсĕр ĕçĕпе фашисла захватчиксем Совет Сойузне вăрçа тӳхма йĕкĕлтеççĕ. Капиталиссем пуçласа йанă империалисăмлă вăрçăн хăрушлăхне епĕр астăватпăр, халь фашисла бандитсем çав тискер хăрушлăха çĕнĕрен чĕртсе йарасшăн.

Лăпкă пурнăçшăн çунакан совет халăхĕ, фашисла агрессăрсене хăйсен йунлă аллисене социалисăм çĕршывĕ çине çĕклеме нихăçан та ирĕк парас çук.

Совет Сойузĕ фашисла агрессăрсене хирĕç кĕрешет, вĕсен планĕсене пăсать тата вĕсен провокацисене вăйлă, хĕрхенӳсĕр отпор парать. Çак миршĕн кĕрешес ĕçре Совет Сойузĕ малта пыракан мĕн пур ĕтемлĕхĕн пулăшăвĕ çине тайанать. Епĕр хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара тата унăн резервне—Осоавиахима мĕн пур вăйсемпе тĕреклетсе пырăпăр. Фашисла вăрă-хурахсем Совет Сойузĕн хăвачĕ çине перĕнсе саланса кайĕç.

Сывă пултăр Совет Сойузĕ!

Сывă пултăр Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ тата Тинĕс Çар Флочĕ!

Сывă пултăр пирĕн пĕрремĕш маршăл, оборонăн хурçă наркомĕ Ворошилăв йулташ!

Сывă пултăр пирĕн çулпуçĕ, пирĕн йуратнă атте, учитĕл Сталин йулташ!".

СОВЕТ СОЙУЗĔ АВСТРИ МАР

(ПСК(б) Парти Чăваш Обкомĕ çумĕнчи парти курсĕнче вĕренекен курсантсен митингĕ йышăннă резолюцийĕн)

1938 çулхи иайулĕн 31-мĕшĕнче Йапони çарĕсем Совет Сойузĕн территори çине тапăнса кĕнине пĕлсен, епĕр пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен тăван çĕршывне—ССР Сойузне хирĕç вăрçа чĕртекен фашиссене чĕререн тарăхса ылханатпăр.

Пирĕн пограничниксем тăшман ССР Сойузĕн территорийĕ çине тапăнса кĕнĕ чухне йуратнă çулпуçăн—Сталин йулташăн: „Епĕр миршĕн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине çапниех ответ пама хатĕр тăратпăр" тенĕ сăмахсене чыслăн пурнăçа кĕртнĕ.

Епĕр шансах тăратпăр, пирĕн пăрхатарлă пограничниксем совет çĕрĕ çине тапăнса килекен фашисла Йапонин ирсĕр йыттисене татăкла отпор пама пултарĕç. Сталинла нарком М. М. Литвинăв йулташ Йапонин мĕскĕн-дипломачĕсене йунакан политикă пире хăратманни çинчен асăрхаттарчĕ. Ку вăл пирĕн Аслă Совет Сойузĕн пĕтĕм халăхĕ калани пулать.

Йапони милитарисĕсемпе Германи фашисĕсем астуса тăччăр: ССР Сойузĕ Китай мар тата Австри те мар, пирĕн Советсен аслă çĕршывĕнче кашни рабочи, колхозник, кашни ĕççынни большевикла парти тата правительствă пĕрре чĕнсенех социалисăмлă государствăн чиккисене хӳтлеме кăкăрпа тăраççĕ. Пирĕн мĕн сыхламалли тата мĕнпе сыхламали пур.

Йапони войеншчинин ирсĕр провокацине ответлесе епĕр хамăр тăван çĕршывăн хăватне, оборона пултарулăхне тата ытларах тĕреклетĕпĕр, халăхăн мĕн пур тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр тупса палăртăпăр тата тĕп тăвăпăр, марксисăмпа ленинисăма çине тăрса тарăнрах вĕренĕпĕр. ПСК(б) Парти Тепкомĕ тата йуратнă çулпуç Сталин йулташ тавра тата тачăрах пĕтĕçĕпĕр.

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă, никам çĕнтерейми Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

САМУРАЙСЕНЕ ОТВЕТЛЕСЕ

(Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсен митингĕ йышăннă резолюци)

Финанс Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Йапони бандичĕсем Совет Сойузне вăрçăпа тапăнма хăтланнине чĕререн тарăхса ылханать. Совет правительстви Совет Сойузĕн чиккисене сыхлас йĕнĕпе туса ирттерекен ĕçсене коллектив пĕтĕмĕшпех ырласа кăмăллать. Йапони самурайĕсем асра тытчăр: вĕсен çакнашкал кашни хăтланăвне пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар татăклă отпор парать.

Йапони войеншчинин çĕнĕ провокацине хирĕç ответлесе Финанс Халăх Комиссариачĕн коллективĕ Осоавиахим организацин оборонă ĕçне тĕреклетме, ĕç дисциплинине вăйлатма, ĕç тухăçне хăпартма тата мĕн пур кăтартусем тăрăх та виççĕмĕш квартал планне 100 проценчĕпех тултарма обйазательствă парать.

Сывă пултăр Совет Сойузĕн мирлĕ политики!

Сывă пултăр Совет Сойуз чиккисен шанчăклă хуралĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕ.

Тĕп пулччăр провокатăрсем!

Йапонипе Манчжури çарĕсем советăн Инçет-Хĕвелтухăç чиккине пăсса совет территорийĕ çине тапăнса кĕрсе кайни çинчен пĕлсенех, Шупашкар хулинчи çĕнĕ строительствăри мĕн пур рабочисем вĕçе-хĕррисĕр тарăхса кайрĕç. Августăн 3-мĕшĕнче пулса иртнĕ митингра рабочисем çакăн пек резолюци йышăнчĕç:

„Асса кайнă Йапони войеншчини хăйĕн ирсĕр те йунлă аллине советăн таса чиккисем патне тăсни пĕтĕм совет халăхне таса çилĕпе тарăхтарать. Сталин йулташ капиталисăмлă йĕритавралăх çинчен каланине епĕр йаланах асра тытатпăр. Йапони войеншчини тунă çĕнĕ провокаци—кĕтмен çĕртен пулнă ĕç мар. Анчах епĕр вăл провокацилĕ ĕçсем çине пĕр хăраса ӳкмесĕрех пăхатпăр. Тăван çĕршыв умне хăрушлăх килсе тухсан, Ленин—Сталин партийĕ тата Совет правительстви аслăн йертсе пыракан 170 мĕлйунлă совет халăхĕ, пурте пĕр çын пек пулса, хамăрăн хăватлă Хĕрлĕ Çар ретне тăрĕ те, Йапони милитарисĕсене тата ытти çавнашкал фашиссене арпа-кĕрпе пек аркатса тăкĕ. Фашиссем Совет Сойузне вăрçă пуçлама ир кĕрлесен, вара çак вăрçă тĕнче историнче халиччен курман хăрушă вăрçă пулĕ, вăл вăрçăра капиталисăм тĕнчи тĕппипех çунса кайĕ. Хасан кӳлли патĕнчи провокацилĕ ĕçшĕн Йапони правительстви хăрушă ответ тытĕ.

Епĕр, çĕнĕ стройкăри рабочисем, Йапони самурайĕсен ирсĕр ĕçне ответлесе хамăр ретсене Ленин—Сталин партийĕ тавра тата çирĕпрех пĕтĕçтеретпĕр, строительствă планне вăхăтра тултарса пыма пулатпăр."

В. Дмитрийĕв.

Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та çирĕп пĕтĕçĕпĕр

Августăн 3-мĕшĕнче Чăвашсен Педагогикă Институтĕнче вĕренекенсем, педагогсем тата служăшчисем Йапони фашисĕсен провокацине хирĕç протестлесе митинг туса ирттерчĕç. Митинга парткомсекретарĕ Германăв йулташ уçрĕ. Йапони самурайĕсем чикĕне пăсса, совет çĕршывĕ çине кĕни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Кун хыççăн студентсем, преподавательсем тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте Йапони самурайĕсен иртĕнсе кайнă ирсĕр ĕçĕсене хирĕç революцилĕ сыхăлăха çирĕплетме, вĕренӳ пахалăхне хăпартма пулĕç, тăван çĕршывшăн пĕтĕм вăйпа кĕрешме хатĕр тăнине палăртрĕç.

— Епĕр иртĕнсе кайнă Йапони фашисĕсене чĕререн тарăхса ылханатпăр,—терĕ студент Комиссарăв йулташ.—Ирĕклĕ Совет Сойузĕ çине тапăнакансене хăйсен территорийĕ çинчех çапса салатма пирĕн вăй çителĕклĕ. Епĕр Совет Сойузĕнчи нумай мĕлйунлă, нумай нацилĕ пĕтĕм ĕçхалăхĕпе пĕрле Йапони войеншчинин провокацилĕ ĕçĕсене ответлесе Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та çирĕп пĕтĕçĕпĕр.

Пулăшкиничен митинг резолюци йышăнчĕ. Резолюцире революцилĕ сыхăлăха çирĕплетме, большевисăла вĕренме, йуратнă тăван çĕршывшăн пĕр тумлам йун йуличчен çапăçма пулни çинчен каланă.

Н. Нарышкин.

Вĕсен ирсĕр ĕмĕчĕсем нихăçан та пурнăçа кĕрес çук!

СĔНТĔРВĂРРИ. Августăн 2-мĕшпе 3-мĕшĕнче районри мĕн пур предприйатисенче, учрежденисенче, колхозсенче Йапони самурайĕсем Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чикĕне тапăннине хирĕçлесе митингсем туса ирттерчĕç.

Спирт савăтĕнчи рабочисен митингĕ йышăннă резолюцире çапла каланă: „Епĕр Совет Сойузĕнчи нумай мĕлйунлă ĕçхалăхĕпе пĕрле Йапони захватчикĕсене чĕререн ылханса тарăхатпăр. Йапони самурайĕсем пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ Йалавлă Фронтăн паттăр бойецĕсемпе çапăçса хăйсен пуçĕсене çеç çийĕç. Вĕсен ирсĕр ĕмĕчĕсем нихăçан та пурнăçа кĕрес çук. Пирĕн партипе правительствă пире чĕнсен епĕр пайанах пĕр çын пек тăшманпа çапăçма тухатпăр. Епĕр тăшманпа мĕнле çапăçмаллине пĕлетпĕр.

Йапони самурайĕсемпе паттăррăн çапăçакан бойецсем сывă пулччăр!

Сывă пултăр маршăл Блюхер"!

Митингсенче оборонă ĕçне вăйлатма татăклă обйазательствăсем илнĕ.

С. Прокопйĕв.

УЙХИРСЕНЧЕ

ВОРОШИЛОВСК. Августăн 1-мĕшĕнче Орджоникидзе крайĕ тĕштырă культурисене пĕтĕмпех вырса пухса пĕтерне. Пурĕ 1.575.132 гектар вырса пухнă. Тырă вырса пухас ĕçе пĕлтĕрхинчен 15 кун маларах туса пĕтернĕ.

Нумай районсенче тырпул тухăçĕ пĕлтĕрхинчен пысăкрах.

Хальхи вăхăтра крайри колхозсем государствăна тырă парса татас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ тата кăмăл сухи тума тытăннă. Тырă тăратас плана августăн 1-мĕш тĕлне край 71 процент тултарнă.

ОРЕНБУРГ. Комбайнер-орденоносец, ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Александр Иванăвич Оçкин икĕ „сталинец" кăкарса ĕçлесе, 11 ĕçкунĕнче 1.211 гектар тырă вырса пухнă. Ĕç пахалăхĕ—отличнă.

КРАСНОДАР. Краснодар крайĕнчи колхозсем пучахлă тырăсем вырса пухас плана 97,3 процент тултарнă. 35 район тырра пĕтĕмпех вырса пĕтернĕ.

АЛМА-АТА. Казахстанăн тырă акса тăвакан хирĕсем çулсеренех ӳссе пыраççĕ. Кăçалхи çуа республикăри колхозсемпе совхозсем ĕлĕк çеремлесе выртнă çĕрсене сур мĕлйун гектар ытла сухаласа пăрахнă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

● Çак кунсенче Н чаçĕн лагерĕ сывăхĕнче „Танкисты" йатлă оборонăлă илемлĕ фильм ӳкерме тытăннă. Фильм ӳкерекен коллективăн аллине хăватлă çар снарйаженийĕ панă.

Фильма Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 21 çул тултарнă тĕле екрансем çине кăтартма пуçлаççĕ.

● Саратăв облаçĕнчи Пугачов районĕнчи колхозсенче кăçал 1.700 гектар çинчи суртырине Иргиз йуханшывĕн шывĕпе шăварнă. Шăварнă уйсем вăйлă тырпул параççĕ.

Ĕçсем пысăк пахалăхлă

ШĂХАСАН. „Ирĕклĕх" колхоз уйри тырпулсене ăнăçлăн пуçтарса кĕрет. Кашни бригадăра перер жнейкă пур, жнейкăсемпе пĕр чарăнмасăр суртри выраççĕ. Жнейкăсемпе тырă вырмали нормăна 200 процент тултараççĕ.

Уйрăм звеносем уйхир ĕçĕнче стахановла ĕçлеççĕ. Ака, А. Йефимăвă йертсе пыракан звенора 12 çын. Вĕсем ĕçе йаланах пысăк пахалăхпа тăваççĕ. К. Васильĕвă, З. Титовă, Д. Алексейĕвă колхозницăсем пур ĕçе те йуратса ĕçлеççĕ.

Н. Михайлăв.

Кĕлтесене — капана

ЕЛĔК, августăн 2 мĕш. (Телефонпа). Синерги Ждановă йачĕпе тăракан колхоз Тураткассинчи „Хурăнçут" колхозпа ăмăртса ĕçлет. Жданăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсем ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешеççĕ. Ырана 5 кун хушшинче такăкаламасăр вырса пĕтерне. Халь звеносем тĕрлĕрен ĕççенче ĕçлеççĕ. Ыраш кĕлтисене итем çине турттараççĕ. Кĕлте турттарас ĕçре Г. Золăтăв ĕç нормине 150 процент таран тултарса пырать. Нормă тăрăх 10 лав турттармала пулсан, вăл 15 лав турттарать. Çавăн пекех кĕлтесене капана хывакан Макçимăв ĕç нормине 130 процент тултарать.

Колхозра тырпулсене сыхлас ĕçе лайăх йĕркелене. Уйра тата итемсем çинче хурал тăраççĕ.

Бригадăсем кантăр пусине татса, шыва хутрĕç. Халь хĕрсех çуртри выраççĕ. Пăрçа-йасмăксене çулса пĕтерчĕç. Колхоз хирĕнче икĕ жнейкăпа пĕр чарăнмасăр ĕçлеççĕ. Ç. Никитин машиновед кунне 7 гектар вырать. Кĕлте çыхакансем хушшинче те лайăх ĕçлекенсем пур. Т. Золотăвă, П. Петрикăвă колхозницăсем нормăна 200-шер процент тултарса ĕçлеççĕ.

Йефремăв.

Государствăна тырă тăратасси çителĕксĕр пырать

ЙĔПРЕÇ. Государствăна типĕ, таса тырă тăратмала. Çакă вăл — кашни колхозăн тĕп задачи пулса тăмала. Йĕпреç районĕнчи колхозсен государствăна кĕске вăхăтрах паха тырă пама пур майсем те пур. Колхозсенче 10 автомашинă пур, уйхирте 10 комбайн ĕçлет. Государствăна тырă тăратас ĕçе организацилеме пĕлни çеç кирлĕ. Районри пур колхозсем те тенĕ пекех ыраш вырса пĕтернĕ, анчах тырă парса татнă колхозсем пит сахал.

Кĕлетсемпе ампарсене вăхăтра тасатса хатĕрлемен пирки нумай колхозсенче çĕнĕ тырра вичта вырнаçтараймаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче клешчсемпе начар кĕрешеççĕ. „Çĕнтерÿ", „Красный водник", „Молния", „Коммунар" тата Будённăй йачĕпе тăракан колхозсенче çĕнĕ тырă çинче клешчсем пулнă. Çавăнпа вĕсен тыррисене йышăнман.

Государствăна тырă тăратас ĕçре автомашинăсем пысăк вырăн йышăнса тăмала. Анчах „Красный водник", „Красный фронтовик", „Красный металлист", Калинин тата Молăтăв йачĕпе тăракан колхозсенче автомашинăсем йусавсăр пирки, ĕçлемесĕр лараççĕ. Çак çÿлте асăннă колхоз председателĕсем тырпулсене уйран пуçтарса кĕме тытăнниччен автомашинăсене йусама, бензин хатĕрлеме тăрăшман.

Хатĕрлев пункчĕ пирки те каласа хăварас пулать. Хатĕрлев пункчĕ çĕнĕ тырра йышăнма хатĕрленмен. Хăшпĕр складсене йусама халь çеç тытăннă. Чылай складсене дезинфекци туман. Пĕр тараса йусавсăр. Районри хатĕрлев пункчĕн çитменлĕхсене халех пĕтерсе, колхозсенчен пыракан тырра пĕр чăрмавсăр йышăнмала тăвас пулать.

Вишневский.

Авăн çапас ĕç хĕрÿлĕн пырать

ВĂРМАР районĕнчи пур колхозсем те ыраш вырса пĕтерсе çуртри вырма, авăн çапма тытăнчĕç. Çавăн пекех ыраш кĕлтисене капана хывас ĕç те хĕрÿлĕн пырать. Асла Чакри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз 181 гектар çинчи ыраша пысăк пахалăхпа вырчĕ. Халь колхозниксем кĕлте турттараççĕ. 175 гектар çуртри вырнă. Государствăна 60 центнĕр тырă леçсе панă.

Бригадăсем, звеносем тата колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ăмăртса ĕçленипе ыраша 6 кун хушшинче вырса пĕтернĕ. Çуртрисене те 6 кунта вырса пĕтерессишĕн социалисăмлă ăмăрту сарăлса пырать. А. Никифăрăв колхозник жнейкăпа çменăра 9-шар гектар вырать.

Николайĕв йертсе пыракан виççĕмĕш бригадă тырпулсене уйран пуçтарса кĕртес тĕлĕшпе стахановла ĕçлесе пырать. Çак бригадă ĕç нормине кулленех 200 процент тултарать.

Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз çуртрисене вырса пĕтерчĕ. Халь бригадăсенче кĕлтесем турттараççĕ, авăн çапаççĕ.

В. Андрийанăв.

Стаханăвла ĕçлесси сарăлсах пырать

ИШЛЕЙ районĕнчи „Хĕрлĕ плуг", „Хăймала", „Большевик", „Ырашпулăх", „Париж Коммунĕ", „Боевик", „Агроном", Сталин тата Калинин йачĕпе тăракан колхозсем ийулĕн 28-мĕш тĕлне ыраш вырса пĕтерчĕç.

Уй ĕçĕнче социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса пырса, „Хĕрлĕ плуг" колхозри машинис Дмитрийĕв жнейкăпа кулленех 8—9 гектар вырса пычĕ. Çавăн пекех „Алино" колхозри машинис Барабанăв 8-шар гектар вырать. „Боевик" колхозри Сундыревă, Кожевникăвă, Илйина алăпа тырă вырас çĕрте йаланах нормăна 200-шер процент тултарса пычĕç.

Мамăшри Буденнăй йачĕпе тăракан колхоз ийулĕн 28-мĕш тĕлне 34 тоннă тĕштырă çапса илчĕ. „Большевик" колхоз государствăна 2 тоннă кăçалхи тырра леçсе пачĕ.

Ал. Садыков. Г. Ошмань.

Пуса татса пĕтерчĕç

ШĂХАСАН. Йамашри „Ударник" колхоз ыраш вырса пĕтернĕ хыççăнах, çуртри вырма тытăнчĕ. Кĕрхи тулăна та вырса пĕтернĕ, 67 гектар кĕрхи тулăна пĕтĕмпех жнейкăсемпе вырнă.

Ийулĕн 29-мĕшĕнче пур бригадăсем те кунĕпех кантăр пусине татрĕç. Пĕр кун хушшинче 8.697 çурăм татна. Халь кантăр пусине пултарма шыва хутма хатĕрленеççĕ.

А. Иванов.

Натурплатă тырри пама тытăнчĕç

ЕЛĔК. Изедеркă йалĕнчи „Ядро" колхоз членĕсен хастарлăхĕ пысăк. Çавна уйри тырпула пуçтарса кĕнĕ çĕрте лайăх курма пулать. Колхозниксем тăрăшса ĕçленине пула колхоз мала тухса пыма пуçларĕ. Пайанхи куна колхоз государствăна тырă парса татрĕ. Машинă-трактăрлă станцине колхоза ĕçлесе панăшăн натурплатă тырри 23,2 центнĕр леçсе панă.

Н. Андрейĕв.

Руководителĕсем хăйсем чăрмантараççĕ

Государствăна аш-какай, сĕт-çу парас тата укçа-тенкĕ пухас йенĕпе Йетĕрне районĕ ытла та кайа йулса пырать. Çак çулта аш-какай тăрантмали плана 37,5 процент, укçа-тенкĕ пухмали квартăл планне 12,6 процент, сĕт-çу памали плана 52 процент анчах тултарнă. Палтай, Мăн-Йĕкĕт, Чурпай йалсовечĕсем государствă умĕнчи обйазателствăсене парса татассипе Ÿрĕк-сÿрĕккĕн ĕçлеççĕ. Палтай йалсовечĕ (председателĕ Йаркутăв) ку таранччен те аш-какай тăратассипе çулталăк планне 21 процент кăна тултарнă. Асăннă йалсоветсенче массăлă ăнлантарулă ĕç кирлĕ вырăнта тăмасть.

Государствă умĕнчи парăмсене тÿлтарас ĕçре хăшпĕр йалсовет тата колхоз руководителĕсем хăйсем кансĕрлесе пыраççĕ. Палтай йалсовет председателĕ Йаркутăв, Кив-Тинкеш йалсовечĕн председателĕ Алексейĕвпа секретарĕ Самойлăв пайанхи куна та 1938 çулшăн пĕр килограм аш-какай та паман. Кив-Тинкеш йалсоветне кĕрекен колхозсен пурĕ 57 центнĕр аш-какай памала пулсан, пĕтĕмпе те 4,5 центнĕр çеç панă. Çак колхозсем государствăна çăм пама тытăнман.

Çавнашкалах укçа-тенкĕ планĕ те квартăлтан квартăла тулмасăр пырать. Пĕрремĕш квартăл планне 69,6 процент, иккĕмĕш квартăл планне 67 процент, виççĕмĕш квартăл планне ийулĕн 28-мĕш тĕлне 12,6 процент çеç тултарнă. Самообложенин çур çуллăхри планне 60,6 процент тултарнă. Иртнĕ çулхи йалхуçалăх налогĕ 27.600 тенкĕ пухăнса çитеймен, иртнĕ çулхи займ укçине те 70 процент çеç пухнă. Займ укçисене март уйăхĕнче парса татмала пулнă. Хучаш, Ачак, Кăкшăм йаловечĕсенче займ пухас ĕç ытла та Ÿрĕк-сÿрĕккĕн пулса пырать. Хучаш йалсоветĕнче пурĕ займ укçи 5280 тенкĕ пухмала. Çурçул хушшинче 4 тенкĕ кăна пухнă. Анат Йавăш колхоз председателĕ Николайĕв йалхуçалăх налогĕ, займ, культсбор, самообложени укçине пĕр пус та тÿлемен. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Чернов йулташ культсбор укçи тÿлемест.

Сухра йалсовечĕ самообложени укçи 7,5 процент, Кĕçĕн-Хăмăрка йалсовечĕ 2,1 процент çеç пухнă. Çак укçасене пухманни çĕнĕ шкулсем тăвас ĕçре хытă кансĕрлет. Палтайри вăтам шкул çуртне виççĕмĕш çул тăваççĕ. Строителствă ĕçĕ вăраха тăсăлса пырать.

Укçа-тенкĕ пухас плана тултарманни районри финанс пайĕ йапăх ĕçленинчен нумай килет. Инспектăрсем хушшинче социалисăмлă ăмăрту çук, вĕсем районсенче сахал пулаççĕ, кабинечĕсенчех мĕшĕлтетсе лараççĕ. Йал хушшинче ăнлантару ĕçне туса пымаççĕ. Лайăх ĕçлекен йалсоветсен паха ĕçĕсене ыттисене çитертсе памаççĕ. Польанкă йалсовечĕн займ укçине 100 процентчĕпех тÿлесе татнă. Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займĕн укçине 80 процент тÿленĕ.

Ник. Цветков.

Кам мĕн чухлĕ ĕçленине тĕрĕс çырса пымаççĕ

ТРАК. Чаганарти Тельман йачĕпе тăракан колхозра ĕç дисциплини йапăхса кайнă. Виç уйăх хушшинче колхозниксен ĕç кĕнекисем çине ĕçкунĕсене çырман. Социалисăмлă ăмăрту çинчен кунта сас-чĕв те çук. Бригадирта Прокопйĕв ĕçлет. Вăл кам мĕн чухлĕ ĕçленине шута илсе пымасть. Колхозниксемпе пĕрле уйа та тухмасть. Кам ăçта тата мĕн ĕç тунине уй хапхи патне тухса тăрса, колхозниксем ĕçрен таврăннă чухне ыйтса пĕлсе çырать. Колхоз руководителĕсем уйа ернере пĕрре кăна тухса кураççĕ.

Правленинче уй ĕçĕ мĕнле пынине пĕлмеççĕ. Колхоза çавăн пек йертсе пынă пирки ĕç пахалăхĕ те пит йапăх пулса пырать.

Й. Журавльов.

Пысăк ĕç тухăçлăхĕ

Йелчĕк районĕнчи колхозсем августăн 2-мĕшне кĕрхипе çурхи тырăсене 71,5 процент вырнă. Вăл шутран 2.118 гектар комбайнпа вырнă.

Тимирйазĕв йачĕпе тăракан колхозри Йастребăв тата Кудрйавцĕв машиноведсем кашни кунах жнейкăпа 10-шар гектар ытла вырса пынă.

„Звезда" колхозри Г. Çмирнов машиновед кунне 11,5 гектар вырнă. Кĕлте çыхакансем Нинă Çмирновă 1053 кĕлте, Й. Поликарпăвă — 950 кĕлте çыхса, кулленхи ĕç нормине 250 процент тултарса пынă. Комбайнер Кушманăв йулташ хăйне çирĕплетсе панă комбайнпа кашни куллен 30 гектар вырса кунне 112 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

Тырпулсене вырса пĕтернĕ колхозсем авăн çапас тата государствăна тырă тăратас ĕçе тытăнчĕç.

Гер. Иванов.

1938 çулхи кĕракине акма хатĕрленесси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ 1938 çулхи августăн 2-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çакна палăртаççĕ: кĕрхи тырăсене акмали срук çывхарса çитет пулсан та, колхозсенче тата машинă-трактăрлă станцисенче кĕрхи тырăсене акма хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пырать. Чылай районсенче (Патăрйел, Йĕпреç, Вăрнар, Çĕрпÿ т. ыт. те) ку вăхăтченех çĕртме уйĕнчи виккă тата ытти культурăсем акнă лаптăксене сухаласа пĕтермен, кĕрхи тырăсене акмали лаптăксене пăхса тăрассине организацилемен, машинă-трактăрлă станцисен тата колхозсен çейăлкисене йĕркене кĕртмен, нумай çĕрте вĕсене йусаман тата тасатман, уйа тислĕк тата минераллă удобренисем кăларас план пурнăçланса пымасть, уйрăмах минераллă удобренисем турттарассипе Çĕрпÿ, Шупашкар, Йелчĕк, Елĕк, Трак районĕсем, тислĕк кăларассипе Улатăр (плана 44 процент тултарнă), Вăрнар (21,3 проц.), Йĕпреç (23 проц.), Пăрачкав (24 проц.) т. ыт. районсем те ытла та йулса пыраççĕ. Чылай колхозсенче вăрлăх участкисенчи ыраша çапма тытăнман, районсенчи вăрлăх лабораторисем вăрлăхсене сăнаса тĕрĕслеме хатĕрленмен, райçĕрĕç пайĕсемпе йалхуçалăх снабженийĕ вăрлăхсене вутпуççирен чÿкемелли йапаласене кÿрсе килес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене вăхăтра туса иртермен.

Çаксем пурте ĕнтĕ районсенчи парти, совет тата çĕрĕç органĕсем çитес çулта кĕрхи культурăсем йенĕпе вăйлă тырпул туса илессине пуриччен ытла кĕрхи тырăсене акма вăхăтра хатĕрленни тата агротехникăлă пур ĕççене те туса иртерни татса панине хакламанни çинчен калаççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райĕçтăвкомсене тата ПСК(б) Парти райкомĕсене кĕрхи тырăсене акма хатĕрленес тĕлĕшпе пур çитменлĕхсене те халех пĕтерме, чи малтанах, кĕрхи тырăсене акмали лаптăксене пăхса тăма, виккă тата ытти культурăсем акнă лаптăксене сухаласа çитерме, тислĕке тата минераллă удобренисене пĕтĕмпех турттарса кăларма кирлĕ ĕççене туса хушас.

2. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, МТС директăрĕсене кĕрхи тырăсене 100 процентчĕпех ретлĕ акса хăварма, МТС тата колхозсенчи пур çейăлкасене те августăн 10-мĕшне çитиччен хатĕрлесе çитерме хушас. Кĕрхи тырăсене акнă вăхăтра МТС-ăн трактăрсен пур çейăлкисемпе те, çавăн пекех лашасемпе ĕçлемели çейăлкасемпе акара туллин усă курмала.

3. Вăрлăх участкисенчи тата районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсенчи тырăсене вăхăтра çапма тата Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кăтартнă план тăрăх колхозсем хушшинче вăрлăхсене улăштарассине вăхăтра иртерме хушас. Райçĕрĕç пайĕсене, колхоз правленисене кĕрхи тырăсене вутпуççирен чÿкенĕ тата вăрлăхсене тĕрĕслекен станцисем вăрлăх мĕнле шăтнине тата тасалăхне тĕрĕсленĕ, пысăк категорилĕ вăрлăхсемпе çеç акма хушас.

4. Кĕрхи тырăсене кĕске срук-сенче акса хăварасси — вăйлă тырпул туса илессинче татса паракан пулса тăрать. Çавăнпа та кĕрхи тырăсене акса хăвармалли вăхăта 6—8 кун кăтартса парас, Çĕрĕç Халăх Комиссариатне кашни уйрăм районсем тăрăх уйрăм суруксем кăтартса пама хушас.

5. Кĕрхи тырăсене акма начар хатĕрленнине палăртса, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ райĕçтăвкомсене тата ПСК(б) Парти райкомĕсене августăн 1-мĕшпе 7-мĕш хушшинче колхоз председателĕсен, йалсовет председателĕсен районри канашлуне иртерме, унта кĕрхи тырăсене акма хатĕрленес тата кĕске срукра акса хăварас тĕлĕшпе кирлĕ татăклă ĕççем çинчен сÿтсе-йавма хушас.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ çакна палăртаççĕ: кĕрхи тырăсене акса хăварасси партипе совет организацисенчен тата çĕрĕç органĕсенчен колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче массăлă-политикăлă ĕççене анлăн сарса пыма, социалисăмлă ăмăртăва тата стахановла йухăма организацилеме ыйтать, çав никĕс çинче кĕрхи тырăсене большевикла акса хăварма, тырпулсене пуçтарса кĕрес ĕççене вĕçлеме тата государствă умĕнчи обйазателствăсене пурнăçлама колхозниксен пĕтĕм массине мобилизацилемеле.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ А. ВОЛКĂВ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн секретарĕ Г. ИВАНОВ.

Гектартан 17-шер центнĕр ыраш

Трак районĕнчи „Çĕнĕ хуçалăх" колхоз колхозникĕсем тырпулсене кĕске вăхăтра пĕр тăкаксăр вырса пĕтерчĕç.

Ыраш кĕлтине августăн 1-мĕшне турттарса, капана хывса çитернĕ. Пăрçа-йасмăксене те çулса пуçтарса кĕнĕ. Государствăна ыраш парса татнă. Ыран, августăн 6-мĕшĕнче, колхоз çуртрисене вырса пĕтерет.

Уйхир ĕçĕнче колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче стахановецсен хисепĕ чылайах ÿсрĕ. Д. Павлăв, К. Порфирйĕв, Й. Карпăв, П. Йакимăвă, В. Филиппăвă йулташсем уй ĕçĕнче нормăна 200-шер процент тултарса ĕçлерĕç.

Колхоз агротехникăлă ĕççене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе, вăйлă тырпул туса илчĕ. Вăтам хисеппе кашни гектартан 17-шер центнĕр ыраш, 16,5-шер центнĕр кĕрхи тулă туса илнĕ.

Г. Йерисăв.

Финанс органĕсенче дисциплинăна ÿстермеле

1938 çул — сталинла виççĕмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕ. Çак çулта халăх хуçалăх планĕсене пур йенĕпе те ăнăçлă тултарса пымалли условисем пурте пур.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче хуларипе йалти ĕçхалăхĕн производствăлă тата политикăлă активлăхĕ вăйлă ÿсрĕ. Иртнĕ суйлавсенче коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ çĕнтерчĕ, ĕçхалăх массийĕ Ленин — Сталин большевикла партийĕ таврă тачă пĕтĕçрĕ. Ĕççыннисем хăйсен ĕçне чĕререн йуратса туса пыраççĕ, вĕсем çĕнтерÿсен организатăрне, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа чĕререн йуратаççĕ. Çаксем ĕнтĕ стахановла йухăма тата та анлăн сарса ĕçлеме, халăх хуçалăх планне тултарма тата çавăн пекех финанс планне вăхăтра тултарса пыма май параççĕ.

Иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе колхозлă хресченсем хăйсен пуйан та культуралă пурнăçникĕсне татах та çирĕплетрĕç.

Пысăк савăтсем, шкулсем, пульницăсем, çулсем тăвасси тата ытти строителствăсем те сарăлса пыраççĕ. Колхозниксемпе ĕççынни йединоличниксем ирĕкре ĕçлесе укçа тупаççĕ. Çакна май ĕнтĕ рабочисем, служăщисем, колхозниксем тата йединоличниксем нумай укçа тытакан пулчĕç. Вăл перекет кассисенче вкладсен хисепĕ ÿсиничен те лайăх курăнать.

Халăх тăшманĕсем финанс ĕçĕнче сăтăрлă ĕççем нумай турĕç. Вĕсем партипе совет влаçĕн налог политикине, финанс органĕсенчи дисциплинăна, финанçла бйуджет дисциплинине пур майсемпе те пăсса пычĕç.

Тăшмансене тупса тытса финанс органĕсенчен хăваласа кăларнă. Финанс халăх комиссариатĕнче тата чылай райфинпайĕсенче çĕнĕ çынсене ĕçлеме лартнă. Финанс органĕсен ĕçне çавăн пекех финанс агенчĕсем, налог инспектăрĕсем, ревизорсем çĕнĕ вăйе хутшăнчĕ. Вĕсенчен чылайĕшне пĕчĕк ĕççенчен ответлă вырăнсене куçарнă. Çак работниксен общественлă-массăлă ĕçре çителĕклĕ опыт пур. Вĕсем хăйсене шанса панă ответлă ĕççене лайăх туса пыма курссенче, семинарсенче вĕренчĕç.

Çапах та Финанс халăх комиссариатĕнчи работниксемпе вырăнти органсенчи (райфинпайĕсем, хула совечĕсен финанс пайĕсем) работниксем партипе правителствă вĕсем умне лартнă задачăна çителĕклĕ пурнăçласа пыма тытăнман-ха. Сисĕмлĕх çинчен, тăшмансен сăтăрла ĕçĕ çинчен нумай калаçнă. Анчах тăшмансен сăтăрла ĕç йулашкисене хăвăртрах пĕтерес тĕлĕшпе витĕмлĕн ĕçлени çук-ха. Финанс халăх комиссариатĕнче тĕрлĕ пайсен начальникĕсемпе ответлă ревизор-исполнителĕсем, ревизорсем, економистсем тата ытти сем аппаратра 75 çынтан та иртеççĕ. Анчах вĕсем хăйсен конкретлă участкисенче ответлăха туйса ĕçлени çителĕксĕр.

1938 çулăн çурçулĕ иртрĕ. Нумай работниксем районсенче темиçешер хут та пулнă. Инспектăрсемпе ревизорсем командировкăсене уйăхĕ-уйăхĕпе пурнăççĕ. Райфинпай пуçлăхĕсемпе ытти работниксен канашлăвĕсене те темиçе хут иртернĕ. Кашни кун приказсем, циркулярсем, распорйаженисем çырнă, радиограммăсем, телеграммăсем нумай йанă. Çапла государствă укçине çĕршер пин тенкĕ тăкакланă. Анчах ĕç çителĕксĕр пырать.

Укçа-тенкĕ пухмали 1-мĕш квартăлти плана 60,5 процент, 2-мĕш квартăлти плана 72,2 процент çеç тултарнă. 3-мĕш квартăлта та çителĕклĕ ĕçлени çук-ха. Ийулĕн 20-мĕшне илсен плана 10,4 процент çеç тултарнă.

Республикĕпе илсен малтанхи çурçулшăн налогсемпе тĕрлĕ тÿлевсем 4,5 мĕлйун тенкĕ, вăл шутран йалхуçалăх налогĕ 600 пин тенкĕ, културсбор — 2 мĕлйун тенкĕ, самообложени — 1 мĕлйун тенкĕ тата страховани укçи 300 пин тенкĕ пухăнмасăр йулнă.

Çавăн пекех государствă тупăшĕнчен, таварçаврăнăшĕнчен пухмалли налог планĕсене иккĕмĕш квартăлта тултараймаи. Виççĕмĕш квартăлăн малтанхи 20 кунĕнче те ку йенĕпе плана çителĕксĕр тулса пырать.

Халăх хушшинче укçа-тенкĕ пухмали плана, çавăн пекех государствă тупăшĕ йенĕпе те плана тултарса пыманнине пула, 1938 çулхи план тăрăх тума йышăннă пысăк строителствăсене укçа парса тăрас ĕçре йăнăшлăх тухса тăчĕ. Рабочисемпе служăщисене, медицинă работникĕсене тата ытти работниксене те ĕç укçи вăхăтра парса пыраймаççĕ, финанс планне тултарманни çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçре те кансĕрлет.

Паллах ĕнтĕ, çавăн пек йулăшла, дисциплинăна пăхăнмасăр ĕçлесен, финанс ĕçĕнчи работниксем партипе правителствă директивĕсем çинче ответсăрла пăхсан, епĕр хамăр ума лартнă политикăлă тата хуçалăхлă задачăсене тивĕçлипе пурнăçласа пыраймастпăр.

Нумай финанс агенчĕсем вуншар кун райфинпайне пымасăр йалсенче çÿреççĕ, анчах хăйсен участкисенче йединоличниксенчен пухмали укçасене пухса пĕтерессишĕн çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Финанс пайĕсен пуçлăхĕсем вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе тăмаççĕ. Уйрăм финанс агенчĕсем ĕçкĕне йерсе кайнă, ерниле туйсенче çÿренисем те пулнă. Шăнкăртам районĕнче Красноз ĕççе çÿрет, уйрăм расписксем парса халăхран налог пухать. Кун пек киревсĕр ĕç тăвакан райфинпай пуçлăхĕсем те пур (Ишлей районĕ — Лебĕдев). Вĕсем хăйсем тăтăшах ĕçнипе ĕçе пĕтĕмпех йапăхтарса йачĕç, финанс органĕн ĕçне халăх умĕнче вараласçĕ. Кун пек работниксене финанс органĕсенче пĕр кун та тытма йурамасть.

Халăхран укçа-тенкĕ пухмали плана начар пурнăçласа пынишĕн, финанс органĕсемпе пĕрлех, суд ĕçĕнчи уйрăм работниксем те айăплă. Хăшпĕр районсенчи халăх сучĕсенче финанс органĕсем йединоличниксенчен пухмали укçасене шырса илме панă ĕççене нумай вăхăт пăхса тухмасăр усраççĕ. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă постановлени пурнăçа кĕрсе пымасть. Çакăн пек ĕççене судра 5 кун хушшинче пăхса тухмала пулин те, уйăхшер пăхса тухмасăр тытса тăраççĕ. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи халăх сучĕнче пăхса тухмасăр нумай тытса тăнă. Кун пек тĕслĕхсем ытти районсенче те пур.

Финанс органĕсен укçа тÿлемесĕр кутăнланса тăракан пур йединоличниксене те (сырупа асăрхаттарнине пурнăçламасан) палăртса вĕсем çинчен ĕçе суд органĕсене памала. Халăх сучĕсем ĕç тăрăх йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес пулать.

Халĕ, республикă финанс планне тултарас ĕçре прорыва йулнă вăхăтра, финанс органĕсене пысăк пулăшу кирлĕ. Апла пулин те йала кайма уйăрнă хăшпĕр работниксем ерни-ернипе йалсене каймасăр тăраççĕ йе тата йалсенче пулсан та ĕçе вĕçличчен кайала таврăнаççĕ. Ку вăл уйрăмăнах Сĕнтĕрвăрри районĕнче Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Займне сарнă вăхăтра сисĕнчĕ. Хăшпĕр йалсоветсем халĕ те: финанс агенчĕсем пур, вĕсен çак ĕçе тумала тесе, çак ответлă ĕçрен айакра тăрса йулни палăрать. Хĕрлĕ Чутай тата ытти хăшпĕр районсене кĕрекен йалсенчи активиссем хăйсем те налогсемпе ытти тÿлевсене парса татман тĕслĕхсем пур.

Халăхран укçа-тенкĕ пухассипе Государствă банкĕн касса планне тултарас ĕçре таварçаврăнăш планне тултарни тĕп вырăнта тăрать. Малтанхи çур çул хушшинче суту-илÿ тăрăх пухăнмали укçа 13,6 мĕлйун тенкĕ пухăнмасăр йулнă. Суту-илÿ организацисем кулленех кирлĕ таварсене çителĕклĕ кÿрсе килмесçĕ, таварсем базăсемпе складсенче нумай вăхăт выртаççĕ. Çăкăр, пахча-çимĕç, çырла, квас тата ытти ĕçмели шывсем сутас ĕç начар сарăлса пырать. Нумай район центрĕсенче çăнăх кÿрсе тăмаççĕ тата хăшпĕр çĕрте çăнăх пулсан та çăкăр пĕçермеççĕ. Улатăртан Пăрачкава Сăр шывĕ тăрăх çăнăх илсе кайнă чух çул çинче пĕр уйăх иртет. Автомобил транспăрчĕпе турттарас ĕçе организацилемен. Кĕçĕн Йелчĕк районĕн центрĕнчи пасар кунĕсенче тата ытти кунсенче те йунешарти районсемпе Тутар республикинчен килсе çăкăр ытти çимĕçсем сутаççĕ. Çав вăхăтрах вырăнти йалпосем çак ĕçе организацилемен. Çĕмĕрлери организацисен çăнăх та, пекарнисем те пур. Апла пулин те вĕсем Финанс халăх комиссариатне: Суту-илÿ халăх комиссариачĕ çăкăр пĕçерес ĕçе организацилемест, тесе çыраççĕ. Мĕн тăваççĕ-ха районри организацисем? Вĕсен çак ĕçе организацилеме те вăй çитмест-и?

Халĕ тырпулсене пухса кĕртес тата тырă хатĕрлес кампани пынă май йалсене нумай тавар турттарса килеççĕ. Суту-илÿ организацисен ПСК(б)П Обкомĕ йатарласа йышăннă постановлени тăрăх суту-илÿ ĕçне большевикла организацилемеле.

Вырăнсенчи финанс органĕсен çак ĕçе активлăн хутшăнмала, Государствă банкĕн уйрăмĕсен те айакра тăма йурамасть. Банкра ĕçлекен работниксен укçа-тенкĕ суккишĕн пĕр ытти организацисем çинче çеç айăпа хума пăрахас пулать.

Паллах ĕнтĕ, халăхран укçа-тенкĕ пухмали план тулманни, касса планне тултарманни, суту-илÿ ĕçĕнчен тупăш сахал килни чи малтан Финанс халăх комиссариачĕ, Госбанк кантурĕ, перекет кассисем, Суту-илÿ халăх комиссариачĕ тата Чăвашсойуз йапăх ĕçленинчен килет.

Халĕ ĕçе никçанхинчен те ытларах вăйлатма кирлĕ. Йулăхланса ĕçлессине пĕтерес пулать, ответлăха тата государствă дисциплинине ÿстермеле. Партипе правителствă лартнă задачăсене пĕтĕмпех пурнăçламала. Финанс халăх комиссариачĕпе унăн вырăнти органĕсем (финанс пайĕсем) пĕтĕмпех çĕнĕле ĕçлесе пыма тытăнмала.

ЧАССР Финанс халăх комиссарĕн заместителĕ И. Золотников.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Епеçри парторганизаци çинчен

Епеç (Йěпреç р.) парторганизацине Çěнě Чурашра тумалла пулнă, мěншěн тесен кунти ултă коммунисран тăваттăшě Çěнě Чурашра. Парторг Алексеéв тата, парторг заместителě Пашков йулташсем Çěнě Чурашра, вěсем пěри йално председателěнче, тепри йалсовет председателěнче ěçлесе пурăнаççě. Епеçре пěр парти членě З. Т. Тимофеев анчах.

Парторганизацине производствăлă-территорилě принципа организацилемении ěçре кансěрлет. Отчотпа суйлав пухăвě пулнăранпа пěр пуху та пулман. Коммунисем ниçта та вěренмеççě.

Хěлле Алексеéвпа Пашков йулташсем заочнă вěреннě пекки тунă, кайран программăна пěтермесěрех вěренме пăрахнă. Петухова йулташа парти ретне тасатнă вăхăтра политикăлă ыйтусене начар пěлнěшěн парти членěнчен кандидата куçарнă. Халĕхи вăхăтра Петухова йулташ „Чувашия" колхоз председателěн заместителě пулса ěçлет. Вăл хăй пěлўне ўстерессишěн тăрăшат, анчах ăна парторганизаци пулăшмаст. Парторг Алексеéв Петухова мěнле кружокра вěреннине те пěлмест. Парторганизацин Петухова йулташа ěçре кирлě пек пулăшу парса, парти членне илме хатěрлемеле.

З. Тимофеев партин ватă членě. Вăл 60 çулта. Унăн 8 çухрăм таран заңатисене çўремеле. Палăх, ăна çурран çўреме йăвăр. Анчах ку ыйтăва парторг „пěчěк ěç" тесе ку таранччен те татса памаст. Çавăнпа та Тимофеев ниçта та вěренмест.

Парторганизаци колхозниксем хушшинче политикăлă-массăлă ěçе кирлě пек организацилемен. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечěсене суйланă вăхăтра 40 йахăн агитаторсем пулнă пулсан, халě вěсем саланса пěтнě. Вěсене парторганизаци йертсе пымаст.

Парторганизацин пилěк пуçламĕш комсомол организацисене йертсе пымала, анчах йертсе пыни çук. Парторг Алексеéв пěр комсорга та палламаст. Вěсемпе нихăçан та пěр сăмах та калаçман. Ěçре комсомолецсемпе усă курма пěлменнипе йалти çамрăксем хушшинче ěçлесси те пачах пěтсе ларнă.

Парти резервисемпе ěçлемен пиркийех парторганизаци те ўсмест. Парторганизаци кăçал пěр çынна та парти ретне илмен.

ПСК(б)П райкомěн Епеç парторганизаци ěçне йěртсе йарасси, парторганизацине Çěнě Чураша куçарасси çинчен сўтсе-йавса решени йышăнмала.

А. Михайлăв.

Парти ретне ўстерессишěн тăрăшмаççě

Хутарти (Çěмěрле районě) пуçламĕш парторганизаци (парторгě Й. Тихăнăв) хăйěн ěçне ПСК(б)П Тěпкомěн 1937 çулхи февраль-март уйăхсенче тата 1938 çулхи йанвар уйăхěнче пулса иртнě пленумěсем кăтартса хăварнă пек улăштарса çěнетмен. Кăна парти ретне çěнě членсем илес тěлěшпе сўреккěн ěçлесе пынинчен те аван курма пулат. 1937—38 çулсенче пěр çынна та парти ретне илмен. Сочувствуйущчисемпе, комсомолецсемпе тата партире тăман активиссемпе ěçлессине калама çук начар организацилене. В. Капитонăв, Н. Мазйаков тата Ф. Йакăвлев йулташсем 1932 çултах сочувствуйушчисен ретне кěнě. Анчах парторганизаци сўреккěн ěçлесе пынипе вěсене пайанхи кунччен те парти ретне илме хатěрлесе çитермен.

П. Иакăвлăв.

Манăн обйазательствăсем

Ленинла-Сталинла Комсомол 20 çул тултарнă йатпа епě çакăн пек ěçсем тума пулатăп:

Производствă программине йалана 200 процентран кайа мар тултарса ěçлетěп. Долбежнăй станок па ěçлекен Калашёв йулташа хамăн опытпа паллаштарса, йаланах вěрентсе пырса, ăна та кашни кунхи нормăна 200 процентран кайа мар тултарса ěçлекен тăватăп.

Политкружока йаланах йěркелě, пěр сиктерми сěр çўресе „хорошо" паллăран кайа мар вěренсе пыратăп.

Çакăнпа пěрлех тата епě ěç тухăçлăхне хăпартма, простой, брак пулассине пěтерме, упрйажнăй отделенинчи рабочисем хушшинче социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йама, культмассăлă-ăнлантарулă ěçе туса пыма пулатăп.

Канашри вакунсем йусакан савăтри стахановец-комсомолец Петр Казаков.

Парти вěренěвěнчи сезонлăха хирěç

ПСК(б)Парти Шăмăршă райкомěнче ěçлекен йулташсенчен парти вěренěвě халĕхи вăхăтра мěнле пыни çинчен ыйтсан, сěтелрен списка туртса кăлараççě.

— Вěренекенěсем пур, а вěрентекенěсем, пропагандиссем çителěклě-и?..

— Вěрентекенсěр мěнле пултăр... Пур конешнă...—тет парткабинет пуçлăхě Чудаков йулташ.

Умра татах та тепěр списка. Кунта пропагандиссен йачěсене йěркен-йěркен çырнă.

— Карзанăв Иван парти историне вěрентекен пропагандист... Халě ěçлет-и вăл?

— Çук, ěçлемест. Вăл Шупашкара кайни икě уйăх çитет ентě.

— Севрўгин йулташ ěçлет-и?

— Отпускра.

— Пудовкин пропагандист ăçта?

— Шупашкара икě уйăхлăха вěренме кайнă.

— Сивкин ăçта?

— Курортра... т. ытти те.

Çапла тěрлě сăлтавсемпе ěçлемеççě пропагандиссем. Вěсем ăçта килчě унта саланса пěтнě. Хăшпěр кружоксенче занятисем пулманни 2—3 уйăх иртнě.

Халĕхи вăхăтра районра парти историне вěренмели икě кружок кăна ěçлеççě. Вěсенчен пěри Вырăс Чукалěнче (пропагандист—Сорокин йулташ), тепри „Трактăр" колхозра (пропагандист—Чудаков йулташ).

Парти вěренěвě районра мěнле пынипе парти райкомě те çителěклě интересленмен, пропагандиссене пухса çеминарсем туса ирттересси аран-аран пулкаласа пынă. Начар ěçлекен пропагандиссем тата вěренўрен пăрăнса йулакан коммунисем пирки парти райкомě кирлě мерăсем йышăнман.

Уйрăмăнах кунта парткабинет ěçě çинчен те каламала. Парткабинет районри пропагандиссене кулленхи ěçре пулăшу парса пымала. Анчах Шăмăршăри парткабинет пайанхи куна çитсе те йěркелěн ěçлесе пыраймаст-ха.

Парткабинет пуçлăхě Чудаков йулташăн парткабинет ěçне халех йěркелесе йамала.

Чи малтанах парткабинетăн ěç планě пулмала. Çав план тăрăх пропагандиссене, агитколлектив руководителěсене пухса çеминарсем туса ирттермеле, консультацисем памала. Парткабинет пуçлăхěн кружок заңатийěсенче пулса, пропагандиссене конкретлă пулăшу памала.

ПСК(б)Парти райкомěн парти вěрентěвěнчи сезонлăха пěтерсе, парти членěсемпе кандидатсене, сочувствуйушчисемпе колхозри активиссене большевикла воспитани парас ěçе кěске вăхăтрах лайăхлатмала.

Н. Косойкин.

Алăстаçсем хушшинчи культуралă-массăлă ěç

Çултаlăк çура кайарăх Чăваш-промсойуз системинче ěçлекен алăстаçсем хушшинче политикăлă агитаци тата культуралă-массăлă ěç питех те начар пулса пынă. 1936 çулта сойуз пěрлешўерсе тăракан 70 ертелте те политикăна вěренмели кружоксем 36 çеç пулнă. Вěсенче 642 çынна йавăçтарнă пулнă. Художествăлă пултарулăх кружокěсем 23 шутланнă. Анчах вěсем те йěркелě ěçлеймен. Кăçал ертелсенче политикăна вěрентекен 120 кружок ěçлет, вěсенче 3000 алăстаç ытла вěренеççě. 51 ертте организацилене художествăла пултарулăх кружокěсене 1020 çын йавăçтарнă. Кашни ертелте библиотекă пур. Иртнě ултă уйăх хушшинче библиотекăсем валли 6235 кěнеке туйаннă. Унсăр пуçне куçса çўрекен библиотекăсем 15 организацилене. Библиотекăсен вулавçисем 1700 çын ытла шутланаççě. Пур ертелсенче те тене пекех массăпа хаçат-журналсем вуласси организацилесе, унта 20 пин çынна йавăçтарнă. Хут пěлменнисене тата сахал пěлекенсене вěрентмели кружоксем ěçлеççě. Çак ěçсенчен пысăк пайне алăстаçсен хушшинчи культуралă вайпа тунă.

Агитаципе пропагандă тата культуралă-массăлă ěçсене уйрăмăнах Шупашкарти „Авторемонт" ертеленче лайăх йěркеленě. Унта ПСК(б)Парти историне вěренмели кружок пěр чарăнусăр ěçлет. Ертелте турасăрсен кружокě пур, унта 70 çынна йавăçтарнă. Кăçал тěне хирěç ыйтусем тăрăх 4 лекци организацилене. Футболпа волейбол командисем те начар мар ěçлеççě. Ертелти драмкружок ытти ертелсенче те постановкăсем парат. Цехсенче куллен политика ыйтăвěсем тăрăх калаçусем пулса иртеççě, хаçат-журналсене вулассине организацилене. Çакăн пек ěçлени производствă планне ăнăçлăн пурнăçа кěртсе пыма пулăшат. Ертел хăйěн планне йалан тултарса пырат. „Кооператор", „Личный труд", „Крестьянский кузнец" ертелěсенче те культуралă-массăлă ěçе лайăх йěркеленě.

Анчах та культуралă-массăлă ěç пур ертелсенче те çителěклě пулса пырат теме çук. Кувакинă районěнчи „19 лет Октября", Вăрнар районěнчи Хăпăс тата Ишлей Покровски ертелěсенче политикăна вěренмели тата художествăлă пултарулăх кружокěсем те çук. Хаçат-журналсем вуласа памаççě. Промсойуз руководителěсем культуралă-массăлă ěç çине сăмалан пăхнипе, ертелсен ěçсене йаланах тěрěслесе пырассине организацилемен. Çавна пула ертел правлени председателěсем те культура ěçěшěн ответлăх туймаççě.

Промысла ертелěсем пуринчен ытларах районсенче, йалсенче. Анчах районсенчи партипе совет организацисем ертелсен ěçěсемпе кирлě пек интересленмеççě. Хăшпěр район руководителěсем ертелсенче ěçлессине пачах хакламаççě. ПСК(б)П Улатăр райкомě ертелсене пулăшас вырăнне, „Красная швея", „14 лет Октября" ертелсенчи культработниксене виçě уйăхлăха урăх ěçе йанă. Сěнтěрвăрри тата Парачкав райкомěсем ертелсене культработниксем параççě те вěсене кěске вăхăт ěçлесенех урăх ěçе куçараççě. Кушашкал çитменлěхсене халех пěтермеле. Районсенчи партипе совет организацисен ертелсен ěçне куллен тěрěслесе пымала, вěсене кирлě вăхăтра пулăшмала. Халĕхи вăхăтра Вăрнар, Ишлей, Шупашкар, Улатăр тата ытти районсенчи 20 ертелте культработниксем çук. Кăтартнă районсенчи райкомсем культработниксене суйласа илме пулăшмала.

Районсенчи çутěç пайěсем кутěлěшпе начар ěçлеççě-ха. Çутěç пайěсен ертелсенче хут пěлменнисене тата сахал пěлекенсене вěрентекенсем уйăрса памала. Анчах халĕхи вăхăтра Патăрйел, Вăрнар, Хěрлě Чутай районěсенчи çутěç пайěсем вěрентекенсем паман пирки хут пěлменлěхе пěтерес ěç чарăнса тăрат.

Ертелсенчи активиссен анлă массипе çыхăнса ěçлемеле, вěсен пултарулăхне, активлăхне çěклесе пымала. Çтена хаçачěсен ěçне йěркелемеле. Тěрлě кружоксен ěçěсене лайăхлатма чи пирвайах кружоксене йěртсе пыракансене хатěрлемеле. Кружок руководителěсене вěрентме çеминарсем, курссем организацилемеле.

Н. Давыдăв.

Коммунисем ěçре йертсе пыраççě

Орининри (Тутаркас районě) кандидатсен группинчи коммунисем хăйсен политикăлă пěлěвне ўстерессипе те, хуçалăхлă-политикăлă кампанисене пурнăçлас тěлěшпе те тăрăшса, хастарлăн ěçлесе пыраççě.

Халě икě кандидата парти членне куçарнă. Репкин йулташа, Орининри йалсовет председателне, парти кандидатне илнě. Тепěр агитатăр парти ретне кěме хатěрленет.

Коммунисем пурте ответлă вырăнсенче ěçлесе, хăйсен пултарулăхěсене кăтартаççě. Вěсем йалпора, вулав çуртěнче тата колхоз производствинче ěçлеççě.

Парторганизаци халăх хушшинче политикăлă агитацине лайăх йěркеленě. Комсомолецсем пур ěçре те коммунисемпе тачă çыхăну тытса ěçлесе пыраççě. Комсомолецсем агитаторсем тата çтена хаçат редакторěсем пулса ěçлеççě. „Восток" колхозри Кульков комсомолец 13 номěр çтена хаçачě кăларчě, çавăн пекех „Сормово" колхозра Павлăв комсомолец 20 номěр çтена хаçачě кăларнă.

Коммунисемпе комсомолецсем тăрăшса ěçленипе Оринин йалсоветěнче Виççěмěш Пилěкçуллăх Займне сарас ěçре çитěнўсем тунă. Йалсоветěнче 17.230 тенкěлěх займ сарнă. Чăваш АССР Верховнăй Совечěн пěррěмěш Çессине хавасланăн кěтсе илнине паллă туса, 3.135 тенкě займ укçи пуçтарнă. Коммунисемпе комсомолецсем тата колхозниксем тырпула пěр тăкаксăр пухса кěрсе, государствăна тыра тăратас ěçе кěске вăхăтра тултарассишěн хастарлăн тăрăшса ěçлеççě.

И. Николаев.

Йапăх хатěрленет

Çěрпў комсомол райкомě ПСÇЛКС 20 çул тултарнă уйава питех те йапăх хатěрленет. Районри нумай комсоргсем хăйсен ěçěсем çинчен манса кайнă. „Шурăмпус", „Глисер", „Малала" колхозсем сумěнчи пуçламĕш организацисенче виçшер уйăх хушши пухусем туса ирттермен. Çавăн пекех член укçи пухассипе те йапăх ěçлеççě. Политикăлă вěренў пачах сўнсе ларнă. Политвěренў пайěн пуçлăхě Майков ним ěç тума та йуратмаст. Нумай колхозри комсомолецсем Сталин йачěпе тăракан автосавăтри стахановецсем комсомол 20 çул тултарнине кěтсе илесси пирки чěнсе каланине сўтсе йавман. Райком сумěнчи пуçламĕш организаци хăй пример кăтартас вырăнне, 4 уйăх хушши пуху туман.

П. П.

Парткабинет пулăшмаст

ПСК(б)П Тутаркас райкомěн парткабинечě ийулěн 15-мěшěнчен агвустăн 1-мěшчен пěр уçăлмасăр хупăнса тăчě. Ийулěн 15-мешчен те, библиотекăр командировкăра пирки, 3—4 хутчен 2—3 кунлăха хупăнса ларчě.

Партин иккěмěш сйесě 35 çул тултарни çинчен доклад тума хатěрленекен йулташсем парткабинетра консультацинче пулма тивěçчě, анчах парткабинет ěçлемерě.

Партин II-мěш сйесě 35 çул тултарнă ыйтупа доклад тума, калаçусем ирттерме мěнле литературăсем вуламалине кăтартса памарě.

Вир Мěтри.

Начар пахалăхлă таварсем

Шăмăршă районěнчи промкомбинат чылай вăхăт хушши ěнтě хăйěн производствă планне тултарса пыраймаст. Иртнě çурçулта 5950 кубла метр хăма кăларас вырăнне 4826 кубла метр çеç кăларнă. Сěтел-пукансем тăвас йенěпе те плана тултарман.

Калас пулат, промкомбинат начар ěçлени условисем çукшăн мар, ěçлеме пěлмен пирки пулнă. Унта пысăк тухăçлăхпа ěçлеме май парак меслетсемпе—социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăмпа сарса ымаççě. Иртнě çулталăк хушшинче комбинатра пěр стахановец та хутшăнман. Рабочисене плана тултарассишěн кěрешме организацилекен çук.

Çаксене пула комбинатра ответсăрлăх хыта саралнă. Цех начальникěсем, маçтăрсем тавар пахалăхне лайăхлатассишěн хăйсене ответлă, тесе шутламаççě. Вěсем рабочисем тунă продукцисене тěрěслемеççě. Çавăнпа кунта брак нумай пулат, таварсене начар пахалăхлă тăваççě. Столйарнăй цехра тунă пукансем çине ларма та çук, краска çыпçăнат. Сăвăшкалах сěтелсене те лайăх сăрламаççě. Атăпуш-каксене те начар йусаççě.

Комбинатăн ěçěсене халех тěрěслесе тухса, райеçтăвкомăн унăн ěçне лайăхлатмала тăвас пулат.

А. Романăв.

Чăваш орфографийě пиркийех

Чăваш орфографин çěнě пройектне пичет урлă сўтсе-йавасси вěçлене çитсе пырат тесе, Наукăпа тěпчев Институчě ийулěн 15-мěшпе 19-мěш кунěсенче пройекта редакцилес шутпа канашлу туса ирттерчě. Вăл канашлура писательсем, учительсем, Чăвашгиз работникěсем т. ыт. те пулчěç. Пěтěмěшпе илсен канашлура пулнă йулташсем пройектпа килěшрěс, теме йурат. Çавна пула Культура Институчě çак кунсенче пройекта йулашкинчен редакцилесе тивěçлě органсене тăратас тесе шутланăччě. Анчах „Чăваш Коммунě" хаçатăн 167 номěрěнче (ийулěн 22) В. Йакăвлев „Пěтěмпех вырăсла алфавит çине куçмала" тенě статйа тухнă пирки, вăл статйа тăрăх пěр-ик сăмах калама тивет.

Автăр ыйтăва питě çăмăллăн лартат. Унăн шучěпе пройекта çыракансем (ăна сўтсе-йавма хутшăннисем те ěнтě) йе тăр ухмах çынсем, йе, пушшех те, клас тăшманěсем. Пройекта тăвакансем (Культура Институчě тейěпěр) автăр каласшăн „хăйсен ăшěнче шутлаççě пулас: сирě халě епěр „пăтă" пěçерсе парăпăр, анчах çисе тасатасси сирěн çине ўкě". Апла кăмсем шутлама пултараççě? Паллах, вредителěсем анчах çапла шутлама пултараççě. Вара, автăр шучěпе, пройекта вредителěсем тунă пулат. Акă мěн калат В. Йакăвлев.

Епěр кун пирки çакна калаттăн: Института халлěхе чăваш алфавичěпе орфографинче тěпренех реформă тума никам та хушман. Ыйту пайанхи кунхи орфографине улăштарасси çинчен, интернационаллă сăмахсене („йут" сăмах мар!) вырăс графикипе çырмала тăвасси çинчен, çак шутпа вырăс алфавичěн сенчен çěнě саспаллисем кěртесси çинчен çеç пырат. Çапла ăнланнă та ěнтě Институт хăй задачине.

Автăр çырнинче тěрěсси те пур. Пройектра сěнекен улшăну çене туни орфографи ыйтуне тěпрен татса памаст. Вырăсла б, г, д, ю, я т. ыт. саспаллисемпе сарлакан усă курмала, вěсене тěп чăваш сăмахěсенче çырмала текен автăр шухăшě пěртте çěнě мар. Ун çинчен ыйтăва хускатса йарас майпа çак статйа автăрě те „Чăваш Коммунě" хаçатра çырнăччě. Вăл ыйту пирки шухăшлаççě те ěнтě. Анчах вăл пěрре ларса тумалли ěç мар иккенне, хатěрленмесěр ик виç уйăх хушшинче тěпрен реформă тума май çуккине, тата пушшех те автăр пăтратнă пек пăтратма йураманнине ăнланса илме питě хěн-ши вара? Автăр орфографи ыйтăвě çине питě çăмăллăн пăхат. Унăн шучěпе вырăс алфавичě çине халех, пайанах, ним те хатěрленмен пулсан та халех куçмала. Вăл йенпе кăм та пулсан ěçлени-ěçлемени,—кам та пулсан пусăрăнса ларса шухлани шухламанни—пурě-пěрех. Çавăнпа автăр пройекта çыракансене тем те пěр калаçа хăтăрса тăкни ěçе пěр шит те пулăшмаст. Çавăнпа унăн шухăшěсем çăмăллăн туйăнаççě.

В. Йакăвлев ча малтанах çапла калат: есěр „йут" сăмахсемпе „хамăр" сăмахсем хушшинче Китай çтени купалатăр, тет. Çакăн хыççăн автăртан—есěр пройекта вулалă-и, йе сынсемчен ыйтнипе анчах çырма лартăр?—тесе ыйтас килет. Пирěн пройектра нихăш вырăнта та ку „йут" сăмах, ку „хамăр" сăмах тесе хăклани вырăн çук-çке. Вырăс чěлхи урлă кěнě интернационаллă сăмахсем (совет, коммунизм, партия т. ыт. те) чăваш чěлхишěн ăçтан йут пулма пултараççě вěсем? Аçтан туртса кăлартăр есěр вăл сăмаха? Акă (вуламан пулсан) итлěр пройектра ун пирки мěнле çырнă: „9. Вырăс чěлхинчен йе вырăс чěлхи урлă урăх чěлхерен кěнě интернационаллă сăмахсен тěпне вырăс графикипех нимěн улăштармасăр çыраççě... Аçта кунта „йут" тенě сăмах?

Автăр малала, пирěн Институт çине тěллесе пулас, çапла ыйту парат „хăш чěлхере хăш çěршывра хутлă-хутлă йěрксем пур ши: пěр правили интернационаллă сăмахсем валли, тепри — „хамăрăннисем" валли? Мěнле пуçпа шухăшласа çакна ěçе кěртме пулат-ши?" тет. Хăй шухăшне çирěплетес тесе вăл тěрлě халăхсем вырăс алфавичě çине куçнине, тěрлě халăхсен практикинчен примерсене илсе кăтартма пăхат. Вăл Крым, Удмурт, Дагестан республикисенче ěç мěнле тăнине кăтартмă пек туса, вулакан куçне тетре сапса хăварма хăтланат. „Дагестанěцсен, — тет автăр, — пирěн пек илтěнекен ă тата ě саспаллисем пур. Вěсем çак саспаллисене çапла çыраççě: ал, ел". Пěлес килет, дагестанěцсем тесе автăр ăçти халăха мěнле чěлхепе калаçакан халăха калат ши? Те дагестан республикинче пурăнакан халăхсене калат. Апла пулсан автăра астутарас пулат: Дагестан республикинче темиçе тěрлě халăх пурăнат. Вěсенчен йышлăраххисем çаксем пулаççě: аварěцсем, кумыксем, даргинцăсем, татсем, лаксем, ногайěцсем т. ыт. те. Хăшин çинчен кунта сăмах пырат? Есěр вулакан тем те çăтса йарат тетěр-и-мěн? Йе сирěн шутпа Дагестан республикинчи халăхě пěр чěлхепе калаçат и мěн? Пěлмен йапала çинчен хаçатра çырмас çě, В. Йакăвлев йулташ.

Автăр ытти республикăсен практикинчен примерсем илни вулаканăн пěртте витěмлě мар, мěншěн тесен вăл материалсене ăçтан илнине автăр пěрех те кăтартмаст. Çавăнпа епěр ун пирки ним калама та аптăратпăр. Ун вырăнне епěр хăй айěнче вырткан хăшпěр официаллă материалсене илсе кăтартар. Акă мордвасен (ерзяпа мокша) орфографийě çěнě пройектěнче çапла калани:

„§ 9 ПРИМЕЧАНИЕ: В заимствованных словах буквы я, ю, употребляются и после непарных согласных: знамя, брошюра, бюллетень, бюро.

§ 11. Буква щ пишется только в заимствованных словах, примеры: плащ, кладовщик, роща и т. д.

§ 13. Буква ъ употребляется как разделительный знак между согласной и гласной буквой в заимствованных словах.

Примеры: съезд, объем, объект.

§ 27. Основы заимствованных и интернациональных слов пишутся по правилам русской орфографии. Примеры: коммунист, большевик, партия, трактор, индустрия.

§ 30. Собственные имена обозначающие названия городов, сел, рек, озер, имена и фамилии людей и т. д. пишутся согласно русской (а не мордовской! И. Я.) орфографии.

Примеры: Баку, Тбилиси, Горький, Днепр и т. д." („Проект морд. орфогр. одобр. язык. конференцией в 1938 г.").

Кунпала çитмест пулсан тата удмуртсен, чеченсен, ингушсен т. ыт. халăхсен орфографине илсе кăтартма пулат. Акă хăш чěлхере, хăш çěршывра (хăш çěршывра мар, хамăр çěршывра!) автăр калакан „хутлă-хутлă" йěрксем пур. Ку йěрксене пěрех те пирěн Институт туртса кăларман.

Паллах, вăл „хутлă-хутлă" йěрксене (автăр калашле) идеалла йăх йěрке тесе калассинчен айакра епěр. Анчах пайанхи куна, орфографинче хăшпěр улшăнусем çеç тунă чухне вăл йěркепе килěшесех пулат. Çавă вара вредительствă пулчě-и Йакăвлев йулташ?

Автăр питě „революцилě" калаçат. „Пирěн чěлхере пур ť, ң, ľ, ç саспаллисем пирки,—тет вăл,— сăмах та пулма пултараймаст, вěсене çăмăллăнах ь саспаллипе çемçетме пулат".

Чăнах та ь, ю, я саспаллисене чăвашсен тěп сăмахěсенче çырсан ť, ľ, ң саспаллисенчен хăтăлма май пур, анчах ç саспалличен хăтăлма автăр каланă пекех çăмăл мар çав. Ç саспаллипе пуçланакан сăмахсем Институт хатěрлекен орфографи словарěнчех 2000 çитеççě. Ç саспаллипе пуçланакан сăмахра ç хыççăн нумай чухне усă сасă тăрат. Вара, автăр каланă тăрăх çава, çăмăр, çўреп сăмахсене сьава, сьăмăр, сьюреп тесе çырмала пулат. Уйрăм сăмахсемпе апла-капла-ха. Предложенисем илсен, акă мěн пулса тăрат. Епěр ултă сăмахлă предложени çеç илěпěр—„Çěмěрлě çěрěнче тěрлě çимěçсем хўхěм ўсеççě." Пирěн автăр вăл предложение çапла çырма вěрентет: „Сьсьмеьрлеь сьеьреьнче теьрлеь сьимеьсьсем хюхеьм юсесьсь еь". Мěн ку: иероглифсем патне таврăнни-и, йе... (çемçен каласан) пуçа сухатни-и?

В. Йакăвлев каланă пек çырма пуçласан, орфографи пройектне çыракансемпе учителсенчен пуçласа, пěтěм чăваш халăхне çěнěрен вулама çырма вěрентме лартас пулат-çке.


Çук, хисеплě автăрăм. „Ă тата ě саспаллисене дагестанěцсем пек аь тата еь тесе, йе урăхла çырма (урăхла мěнле? пулат, кунта каласа татăлма кăна кирлě..., „хăнăхасси малашнехи ěç пулмăла" тенипе ыйту урлă сиккипе каçса кайнипе çителěклě мар. Есěр ку статйăна çырнă чухне ытларах туйăм çине тайăннă, çителěклě таран хирěçўлě ыйтусем çинчен шутласа пăхман. Çавăнпа, пěтěмěшпе илсен сирěн шухăшра тěрěсси пур пулсан та, ç, ă, ě саспаллисене пěтерес тени пайанлăха пěрре сўтсе йавса татса пама çăмăл ыйту мар. Пайанлăха— ť, ľ, ң саспаллисене кăларса пăрахса б, г, д, ж, ь, ю, я саспаллисене тěп чăваш сăмахěсенче çырассинчен маларах кайма та çук пулě. Ăна тума та вăхăт кирлě.

Автăрăн статйинче формаллă логика питě палăрат: йе апла, йе капла. Вăл шухăш тěрěс марри питех те паллă. Тата вăл темěншěн халлěхе тума май çук (йе питě йывăр) ç, ă, ě виçě саспаллийе пěр шухăшласа пăхмасăрах пěтерессишěн. Апла тунипе вăл чăваш чěлхипе çырулăхěнчи нацилě уйрăмлăх пуррине пěтěмпех манса кайат. Кирек йепле пулсан та „пěтěмпех вырăс алфавичě çине куçас" тенипе чăваш алфавичěпе орфографине, çўлте кăтартнă пек пăтравчăклăх патне илсе пырат, пěтěм чăваш халăхě умне тепěр хут çырулăха вěренес йăвăрлăха кăларса тăрат.

Çавăнпа вара, ырă шухăшпа çырма ларнă статйа, вěçне çити шутласа илмен пирки, хăйěн противоположнăçне куçса ўкнě. Орфографине йěркелес техникине, автăр пăтраштару патне çитсе тăнă.

„Улшăнусем" тунă йатпа витěнсе, тěрěс çулран пăрса йаракансене, чăхăмласа тăракансене çул çинчен айакла сирсе йамала", тени сăмах кулли туни çеç пулат. Вăл пройекта тăратакансене никăш йенчен тивни те кўрăнмаст.

И. Йакăвлев.



Итали ҫотчикĕ:
— Халĕ ĕнтĕ пирĕн шыв айĕнче ҫӳрекен кимĕсем Англин суту-илӳ пăрахучĕсенчен хăрамасан та пултараççĕ.
Г. Вальк ӳкерчĕкĕ („Прессклише").

Йут çĕршывсенчи пичет Йапони провокацийĕ çинчен

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем

Совет Сойузĕпе Манчжури никкинче пулса пыракан ĕçсене Америка пичечĕ аплăн çутатса парать. „Скриппс Говорд" йатлă хаçат пĕрлешӳвĕн пичечĕ çапла çырать: „Йапони ССР Сойузĕпе вăрçма шухăшлани пирĕншĕн паллă пулнă, анчах çав утăма мĕншĕн хаяль, Йапони Китайра путса ларнă вăхăтра, тума шутланине ăнланма йăвăр. Паллах, Йапони ăнăççăр вăхăт суйласа илнĕ. Пулма пултарать, ку йапала шанчăка çухатса тунă утăм пулĕ".

„Геральд трибюн" хаçат çапла çырать: „Йапони ниепле те Китайа парăнтараймасть, мĕншĕн тесен вăл хăй вăхăтĕнче кирлĕ пек хакламан противникпе тĕл пулчĕ. Мĕншĕн-ха çакăн пек условисенче Йапони генеральнăй штабĕ калама çук лайăх хĕçпăшалланнă Инçет-Хĕвелтухăçри совет çарĕпе хирĕççе çыхланма шут тытать? Епĕр мĕнле те пулин вывод тума шухăшламастпăр: ку йапала чăнинпех те ăсран тухни пулса тăрать-ши йе вăл ухмаха пеме хăтланни кăна пулать-ши".

Франци

„Эр нувель" хаçат çапла çырать: „Пĕтĕм йулашки çулсем хушшинче Совет Сойузĕ хăй мир ĕçĕшĕн çирĕп тăнине кăтартса пачĕ. Пилĕк çул кайарах Совет Сойузĕ Йапонине пĕр-пĕрин çине тапăнас марри çинчен пакт тума сĕнчĕ. Йапони вăл сĕнӳпе килĕшмерĕ. Нумайах пулмасть Мускав Йапонийе чикĕри инцидентсене пĕтерес шутпа калаçусем пуçлама сĕнӳ пачĕ. Токио унпа та килĕшмерĕ".

Йулашкинчен хаçат: „Совет Сойузĕ Йапони провокацийĕсене хирĕç тивĕçлĕ ответ парĕ, ун пирки иккĕленмели çук", тесе кăтартса парать.

Англи

Совет—Манчжури чиккинчи лару-тăру çинчен Англи пичечĕ нумай çырать. Çапăçу çинчен тĕплĕн каласа кăтартакан ТАСС пĕлтернине пур хаçатсем те пичетлесе кăларнă.

Токиоран килнĕ, Англи пичетĕнче çапăнса тухнă пĕлтерӳсенче, Йапонире тревогă ӳсни çинчен калаççĕ.

Швеци

Пур хаçатсем те: Йапони тăвакан провокацисем, вăл унтан Совет Сойузне хирĕçле вăрçă туса хума хăтлансан, йапонишĕн хакла ларĕ, тесе паллă тăваççĕ. Пичет: Китайа хирĕç пыракан вăрçă Йапонийе банкрот пуласси умне илсе çитерчĕ те ĕнтĕ, тесе кăтартса парать. Хальхи вăхăтра Совет Сойузне хирĕç вăрçă пуçлани—Йапони хăйне хăй вĕлернийех пулнă пулĕччĕ, тесе паллă тăваççĕ хаçатсем.

(ТАСС).

„Сойуздетфильм" студийĕ екран çине „Детство Горького" йатлă сĕнĕ, илемлĕ, саслă фильм кăларнă.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: РСФСР халăх артисĕ орденоносец В. О. Массалитинава—Акулина Ивановна ролĕнче, Алексей Льярский—Альоша Пешков ролĕнче.

Сойузфото репродукцийĕ.

Испанири фронтсенче

Çĕнĕ вайсем пырса çитсен, интервентсем танксем тата нумай самольотсем пулăшнипе, августăн 2-мĕшĕнче Ебро йуханшывĕ районĕнче республиканĕçсен позицийĕсем çине çĕнĕрен контратакăсем пуçланă. Вăл контратакăсене республика çарĕсем çĕмĕрнĕ, вĕсем фашиссене пысăк та йăвăр тăкаксем кӳнĕ. Августăн 1-мĕшĕнче республикăн истребителлĕ самольочĕсем Германин 16 самольочĕпе тата Италин 22 самольочĕпе çапăçнă. Интервентсен 6 самольотне персе антарнă. Республика авиацийĕ 2 самольот çухатнă, вăл самольотсен пилочĕсем парашутсемпе сиксе республика территорийĕ çине аннă.

Теруельрен хĕвеланăç йенче (Левант фронтĕнче) республиканĕçсем темиçе выранта Гвадалавиар йуханшывĕ урлă каçнă, ун çыранĕсем хĕрринче темиçе йал тата высота йышăннă. Республиканĕçсем нумай çынна тыткăна илнĕ тата вăрçă хатĕрĕсем чылай туртса илнĕ.

(ТАСС).

Пăлхавçăсен крейсĕрĕсем каллех стройран тухнă

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, пăлхавçăсен икĕ крейсĕрне — „Канариас" тата „Альмиранте Сервера" крейсĕрсене ийулĕн 31-мĕшĕнче республиканĕçсен Картахенăри çыран хĕрринчи батарейĕсенчен персе пысăккăн сийенленĕ.

Çак крейсĕрсем иккĕшĕ те Кадикса пынă, унта вĕсем çинчи вилнĕ çынсене илнĕ тата аманнисене госпитальсене ăсатнă.

Карапсем çинче çĕмрĕк выранĕсене йусама тытăннă, вĕсене йусама сахалтан та 15 кун кирлĕ.

(ТАСС).

Германири забастовка йухăмĕ

Англи пичечĕ Германи чиккин хĕвеланăç пайне çар укреплениĕсем тума йанă рабочисем хушшинчи забастовка йухăмĕ çинчен пĕлтерет. Забастовкăсене хутшăннăшăн фашиссем 10 рабочие персе вĕлернĕ. [illegible]

Ĕççĕрлĕх ӳссе пырать

Польшăра ĕççĕр тăрса йулнисен шучĕ питĕ хăрушла ӳссе пырать. Çезонлă ĕçсем хĕрӳ пынă вăхăтра та кăçал ĕç тупма шанчăк çухатнă ĕççĕр йулнисен шучĕ 344 пин çынна çитет (чакарса çырнă официаллă кăтартусенче). Вĕсемсĕр пуçне нимле ĕç-укçи илмен йалти çамрăксем 600 пин çын.

Халĕ йалхуçалăхĕнче ĕççĕр йулнисем 8,8 мĕлйун шутланаççĕ.

(ТАСС).

Фашисăмпа вăрçа хирĕç

Çамрăксен пысăк пĕрлешĕвĕсем миршĕн кĕрешекенсен пĕтĕм тĕнчери конгресне кăçал Нью-Йорк хулинче августăн 15—24-мĕшĕсенче туса ирттерме йышăннă. „Гитлĕрла çамрăксем" йатлă Германири Сойузăн руководстви çав конгреса хутшăнассинчен пăрăннă. Анчах апла пулсан та конгреса организацилекенсен йачĕпе Германири тĕрлĕ выранĕсенчен çырусемпе саламсем килеççĕ, вĕсем „III-мĕш империнчи" çамрăксем мĕн пур çĕршывсенчи революцилĕ çамрăксен организацийĕсем фашисăма тата çĕнĕ империалисăмлă вăрçа хирĕç кĕрешнийе пĕр шухăшлине кăтартса параççĕ.

Берлинри студентсен ушкăнĕ çапла çырать: „Гитлĕрла çамрăксен пуçлахĕсем миршĕн кĕрешекенсен конгресне хутшăнма килĕшменни Германинчи çамрăк ăрăвăн чăн-чăн кăмăлне кăтартса памасть. Епĕр миршĕн кĕрешекенсен конгресне саламлатпăр. Мĕн пур çĕршысенчи çамрăксем, хатĕрленекен йунлă вăрçа сирсе йарăр!" Тепĕр çыру Лейпциг хулинчи социалисла тата коммунисла çамрăксен вăрттăн пулса иртнĕ конференцийĕнчен килнĕ, вăл çапла пуçланать: „Гитлĕр тата Ширах (гитлĕрла çамрăксен организацин руководителĕ) пире çамрăксен пĕтĕм тĕнчери конгресне хутшăнма памарĕç. Епĕр сирĕнпе пĕрле пулнине пĕлсе тăрăр. Епĕр вăрçа хирĕç".

„Ирĕклĕ нимĕç çамрăкĕсен" Берлинри ушкăнĕ йапа çыру тупа тунипе пĕтет. [illegible]

(ТАСС).

Иапони акцийĕсем йӳнелсе кайнă

Йапонирен килвĕ пĕлтерӳсем тăрăх, Совет Сойузĕпе Манчжури хушшинчи чикĕри тытăçусене кура, Токиори биржăра пур акцисен хакĕсем те пысăккăн чакнă. Уйрăмăнах мамăк-пиравăр промышлĕннăçĕпе искусствĕннăй пурçăн промышлĕннăç акцисен хакĕсем пит йӳнелнĕ.

Августăн 2-мĕшĕнче Нью-Йоркри биржăра Йапонин хаклă хучĕсен хакĕ пит йӳнелнĕ.

(ТАСС).

Австрири рабочисен пăлханăвĕсем

Польшăри „Полония" хаçат Венăран илнĕ пĕлтерӳ—Австрири рабочисем гитлĕрла режима хирĕç вăйлăн тăни çинчен калакан пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă.

— Тури Австрире,—çырать хаçат,—Германи полицийĕ регулярлă çар чаçĕсем пулăшнипе 2400 рабочие Германийе ирĕксĕр ĕçлеттерме йама пухнă. Çав çынсене пурне те йатарласах илсе пынă 80 вакунлă пуйăс çине лартнă пулнă. Хайсене ăçта тата мĕншĕн чĕнсе илнине, вĕсен кайас кăмăлĕ пуррипе çукки çинчен çав рабочисенчен пĕрне те каламан. Чикĕ патне çитесси 25 километр йул сан, рабочисем, хăйсене ăçта илсе кайнине пĕлсе, пуйăса тытса чарнă, станцăна йышăннă, чукун çул рельсисене сӳтсе тăкнă, паравуса сийенленĕ.

Пăлхава пусарма пырса çитнĕ çар чаçĕсем вăрмансене тарса пытаннă рабочисене, пăшалсенчен персех, хупăрласа тытма пуçланă. 250 рабочие йăхăн чикĕ урлă Швейцарине тарса кăçса унта пытанма ĕлкĕрнĕ. Полици тытнă çынсене çийĕнчех концентрацилĕ лагĕрсене ăсатнă.

(ТАСС).

Çĕнĕ магазинсем

Йулашки вăхăтра Шупашкарта магазинсен хисевĕ ӳссех пырать. Çак кунсенче Карл Маркс урамĕнче [illegible] магазин уçăлать, ăна халь туса пĕтереççĕ. Ĕлĕк культтоварсен магазинĕ пулнă çĕрте комиссионнăй магазин уçăлать.

Кировски посолокра çĕнĕрен пысăк магазин туса пĕтереççĕ, ăна [illegible] уçасçĕ.

Хулари автобуссем

Шупашкар хулинчи пассажирсем турттарса çӳремелли виçĕ çĕнĕ автобус килнĕ. Вĕсем августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа хулара йĕркелĕн çӳреме тытăнаççĕ.

1-мĕш автобус Пединститут—Хĕрлĕ плошчĕт—кирпĕч савăчĕ маршрутпа, 2-мĕш автобус автомобилсем йусакан савăт—Хĕрлĕ плошчĕт—Кировски посолăк маршрутпа çӳрессĕ. Виççĕмĕш автобус йатарласа çĕнĕ строительствăри рабочисене хуларан стройкăна тата кайала турттарса çӳрет.

Çĕнĕ кадрсем

Чăваш АССР Çар комиссариачĕ çумĕнче запасри çар медицина работникĕсен курсĕ уçăлнăчĕ. Ийулĕн 29-мĕшĕнче курсантсем курсран вĕренсе тухрĕç. Вĕренсе тухнисем запасри санработниксен званисене илчĕç.

Вĕренекенсем хушшинче çар техникине тата çар ĕçĕнчи медицинăна вĕренес ĕçре социалисăмлă ăмăрту пысăк выран йышăнса тăчĕ. Çапла майпа Бельцов, Калисăв, Сурков тата Йевсин йулташсем „отличнă" паллăсемпе вĕренсе тухрĕç. Ытти йулташсем „хорошо" паллăсемпе вĕренсе пĕтерчĕç.

Курсантсем хушшинче пурте пекех Ворошилăв пек тĕл перекенсем пулчĕç. Значок илменнисем 7 çын çеçчĕ. Курсра вĕреннĕ вăхăтра вĕсем те Ворошилăв пек тĕл перекенсен значокне илчĕç.

Çавăн пекех тата вĕреннĕ вăхăтра 25 çын ГСО значокĕ, 27 çын ПВХО значокĕ илчĕç.

В. Цыпленкăв.

Редакцине килнĕ çыру

Ответ тыттармалах

Хурамалти (Йĕпреç р.) ача çуратмали çуртра акушеркă пулса Каршевă ĕçлет.

Ийулĕн 18-мĕшĕнче кунта çывăхри йалтан Ф. ача çуратма пынă пулнă. Ача çуратнă вăхăтра 6 çын пăхса тăнă. Каршевă вĕсене хăй чĕнсе кĕнĕ. Çуратнă хыççăнах Ф-на вĕремен сиве шыв ĕçтереççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Ф. халĕ те çăпансемпе асапланать, нимĕнле ĕçе те хутшăнаймасть.

Ача çуратнă хыççăн Ф-на санитаркă ача çуртне питĕрсе хăварнă. Ф. пĕр кун хушши ача çуртĕнче выçă ларать. Ку çеç те мар. Каршевă Ф-на темтепĕр каласа вăрçса пĕтерет. Ф. йулташ макăрса ача çуратмали çуртран йалсоветне кайать. Хăй йепле çуратни çинчен каласа парать.

Кун çинчен районри сывлăха сыхлав пайне темиçе хут та пĕлтернĕ, анчах унта ĕçлекен Беленкова ку ĕçе пытарса усрать. Каршевă акушеркăна ĕçе аркатса йанăшăн унччен те ĕçрен кăларнă пулнă. Беленкова унăн иртнĕ ĕçĕсене пăхмасăрах, ăна тепĕр хут ĕçе илнĕ. Мĕнле уçă пур-ши çакăн пек акушеркăран?

Ача çуратма пыракансемпе çапла тискер хăтланнăшăн Каршевăна ответ тыттармалах.

Д. А.

Ответлă редактăр
Н. М. СЕМЕНАВ.

Страховой сигнал постисем тата обчăллă страховой инспектăрсем

АСĂРХАМАЛИСЕМ

1. Страхланă пурлăха тĕрĕс пăхса усранине тата сыхласа тăнине асăрхама, çавăнпа пĕрлех тата государствăлла страхованийĕ çинчен йышăннă саккунсене пăснине хирĕç кĕрешме колхозсенче страховой сигнал постисене организацилеççĕ.

2. Страховой сигнал постисен членĕсене колхозниксен пухăвĕнче [illegible]

[illegible]

9. Страхланă выльăх-чĕрлĕхсем сумне сирĕплетнĕ страховой сигнал постисен членĕсем çак ĕçсене туса пыраççĕ:

[illegible]

Шупашкарти строительствăна тĕрлĕрен квалификацилĕ инженерсем, економиссем-планировщиксем опытлă снабженецсем, çавнашкалах опытлă йурист кирлĕ. [illegible]
3—2

МЕТРИЧЕСКИ ВИÇЕСЕН Шупашкарти тата Çĕрпӳри мастерскойĕсем [illegible] сем, тимĕрçсем, мăлатук çапакансем кирлĕ. Шупашкарта ĕçлеме аслă бухгалтĕр кирлĕ.
Адрес: г. Чебоксары, ул. Ленина, 3 или Цивильск, бывший весозавод.
3—1

Чăвашгиза
Аслă бухгалтĕр кирлĕ
Çак адресне пымала: г. Чебоксары ул. Володарского, дом № 5, Дом печати, Чувашгиз.

ЙĔТĔРНЕРИ Сталин йачĕпе тăракан артеле çĕвĕçсем, кĕрăрăм çĕвĕçсем, тĕрĕ тĕрлекенсем [illegible] тата матрац тума пĕлекен маçтăрсем КИРЛĔ
Адрес: г. [illegible] ул. Карл Маркс д. № 33.

Чăваш Аптек управленийĕ ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ квалификацилĕ стольарсем, квалификацилĕ машинистка, шофер КИРЛĔ
Адрес: г. Чебоксары, Аптечная улица, 14.
2—2

Чăвашсен Педагогика Институчĕ
1938 çулхи августăн 1-мĕшпе çентябрĕн 1-мĕш хушшинче Чăваш республикинчи Учительсен Институтне йĕме хатĕрленекен курса кĕрес текенсен заявленисене илесси çинчен пĕлтерет.
Курса вăтам шкулаев йе 9-мĕш класран вĕренсе тухнисене тата техникум, педучилище курсĕнче вĕренсе тухнисемпе [illegible] илеççĕ.
Заявленисене Чăваш Пединститут директорĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле памала:
1) тĕплĕн çырнă автобиографи,
2) вăтам шкултан вĕренсе тухнă аттестат подлинникĕ йе 9 класран пĕтĕм курс пĕтерни çинчен [illegible] справкă,
3) паспорт (кайран пĕрле илсе пымала),
4) виçĕ фото-ӳкерчĕк [illegible] 3х4 сантиметр [illegible] пулмалла.
Курса [illegible] рабфак нормипе стипенди параççĕ.
Пединститутăн курсантсем валли общежити пулмасть.
Курса кĕнисене списокă çине кăçалхи августăн 25-мĕшне çентябрĕн 1-мĕш хушшинче документсем тăрăх [illegible] кĕртеççĕ.
[illegible]
Адрес: г. Чебоксары, Чувашской АССР, Чувашпединститут.
Дирекци.
3—3

Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 663.